им. Горько

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ИЙУНĢ
1
ЙУНКУН
123 (4936) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Шкул строителĕствине васкатмала

Сталинла Конституци панă вĕренӳ правиа пысăк ăнăçлăхпа пурнăçа кĕрсе пырать. Пирĕн çĕршывра пурăнакан халăхран виççĕмĕш пайĕ шкулсенче вĕренет. Совет правителĕстви халăха утта кăларас ĕçе çулсерен темиçе çĕршер мĕлйун тенкĕ укçа хывать. Парти, халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ, совет шкулне чи сăк тимлĕхпе пăхаççĕ.

...лĕк, патша саманинче, талккиле тенĕ пек, хут пĕлмен тĕттĕмлĕхре кĕтес пулнă Чăваш çĕршывĕнчи халĕ, Сталин саманинче хаçутта кăларас ĕçĕн утăмĕм уйрăмах пысăккăн курăнать. Коммунистсен партийĕ йертсе пынипе, пирĕн чăваш халăхне, ...зри ытти тăван халăхсем ..., ирсĕр тăшмансене—троцкиссемпе бухаринĕçсене, буржуалла-националисĕсене çапса аркатса, культура фронтне çулран-çул сарса, вăйлăлантарса пырать. Халĕхи вăхăтра Чăваш республикĕнчи пуçламĕш, туллимар тата вăтам шкулсенче кăна 180 пин ытла çын вĕренет. Вĕренекенсен йышĕ çулран-çул 20-шер пин çынна йахăн ӳссе пырать, çулран-çул çĕнĕрен темĕн чухлĕ шкулсем уçăлаççĕ.

Кăçалхи, 1938 çулхи халăх хуçалăхĕн планĕ тăрăх, Чăваш АССР правителĕстви çĕнĕ шкулсем тăвас ĕçе 4 231 пин тенкĕ хыватъ. Ку шутран йалти шкулсен строителĕствине 3 мĕлйун тенке йахăн кайать. 1938—39 вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле пирĕн республикăри йалсенче кăна 31 çĕнĕ шкул туса пĕтермеле. Вĕсенчен 16 шкул çуртне иртнĕ çулсенче тума пуçланă, ытти 15-шне вара кăçал çĕнĕрен тумала.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн X-мĕш çессийĕ шкулсен строителĕствине васкатас пирки питĕ хытă каларĕ. Анчах мĕнле пырать-ха халĕхи вăхăтра çак шкулсем тăвас ĕç?

Иртнĕ çулсенче тума пуçланă шкулсенчен Кукашне (Сĕнтĕрвăрри р.), Штанаш (Хĕрлĕ Чутай р.), ...аш (Шупашкар р.), Турхан (...рхан р.) шкулĕсене кăçалхи май 15-мĕшĕ тĕлне туса пĕтермелле пулнă. Вĕсене пĕрине те кун ... ĕлкĕртеймен, хăшне-пĕрне пĕтермесĕрех йышăнса вĕсене ...ерентме тытăннă.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанаш йалĕнче иккĕмĕш çул ĕнтĕ вăтам шкул тăваççĕ. Мĕнле тăваççĕ ку шкула, строителĕства ĕçĕ мĕнле пырать кунта—районри техник Платонăв йулташ та, райĕçтăвком председателĕ Данилăв йулташ та, шкул директăрĕ Антонăв йулташ та нимĕн те пĕлмеççĕ. Строителĕствăра вут-кăвартан сыхланас тĕлĕшпе нимĕнле хурал тавраш те çук.

Йетĕрне районĕнчи Палтай шкулне виççĕмĕш çул тăваççĕ. Шкул тума 120 пин штук кирпĕч кирлĕ. Кунта пурĕ те 4 пин штук çеç хатĕрленĕ. Райĕçтăвком асăрхаман пирки стройматериалсене ытти çĕре (кĕперсем тума) салатса пĕтернĕ.

1936 çулта Лаш-Тайапари (Йелчĕк р.) 280 ача вырнаçмалăх шкул тума тытăннă, анчах укçа çителĕксĕр пирки, ĕçе пăрахнă. Строй-материалсене тĕрлĕ çĕре салатса пĕтерме пуçланă. Йелчĕкре ача йаçли тумала пулнă—йăвăççене унта турттарса кайнă, халĕ унта йулашки йăвăççене кĕпер валĕçи турттарса кайма хатĕрленеççĕ. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ çав шкул строителĕствине пуçĕпех çухатнă, титул спискине те кĕртмен. Çутĕç Халăх Комиссариат работникĕсем тăшмансен сăтăрла ĕççен йулашкисене пĕтерме кирлине йышăнаççĕ, анчах конкретлă ĕç патне пырса тухсан, çавăра шыв сыпнă пекех шăп пулаççĕ. Строителĕствă пайĕнче ĕçлекенсем тӳрех:—шкул строителĕствинче сăтăрла ĕçсем пысăккăн пулман,—теççĕ. „Сăтăрлă ĕççем пысăках пулманран" пулĕçке ĕнтĕ Лаш-Тайапа шкул строителĕствине титул спискинчен кăларса пăрахнă. Çавăнпа пулĕçке ĕнтĕ Тутаркас районĕнчи Турай шкулне тепĕр хут пăсса çумала.

Кăçал çĕнĕрен пуçламали шкул строителĕствисене пĕр çĕрте те тивĕçлипе тытăнман. Малтанхи вăхăтра районсем Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ шкулсен строителĕстви планне йышăнасса кĕтсе тăчĕç. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ плана, чăн та, кайа йулса, 1938 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче тин йышăнчĕ. Плана йышăннăранпа шкул строителĕствине хĕрсе тытăнма вăхăт пулнă. Анчах çакна курмастпăр-ха епĕр. Вăрнар районĕнче çĕнĕ шкулсем тума пайанхи куна пĕр шăрпăк та хатĕрлемен. Вăрнар райĕçтăвком председателĕн заместителĕ, шкул строителĕствин пуçлăхĕ пулса тăракан Гаврилăв йулташ: вăрман турттарма çул инçе, лашасем çук, тесе сӳпĕлтетсе ларассĕ. Чăраш Хирлеп шкулне тумали материалсене турттарма мар, вăл материалсемшĕн пĕр пус та тӳлемен. Çавнашкалах йапăх пырать ĕç Тутаркас, Йетĕрне, Трак, Тăвай районĕсенче те.

Хăшпĕр райĕçтăвкомсем шкул строителĕстви тĕлĕшпе тытакан „сулйĕр" пире питех те тĕлĕнтерет. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, Мăртынкассинче шкул тумала. Куславкка райĕçтăвком руководителĕсем çак шкула хăш йалта тăвас пирки тавлашма халĕ те чарăнман. Колхозниксем райĕçтăвком хирĕçнине пăхмасăрах, хăйсем пуçарнипе шкул тăваççĕ.

Тикешре те (Вăрмар р.) колхозниксем, райĕçтăвком кăтартса парасса пăхмасăрах, шкул вырăнне хăйсем пăхса, шкула хăйсем тума тытăннă. Райĕçтăвком председателĕ Степанăв йулташ Тикешре 4 кун хушши ларнă пулсан та шкул вырăнне кайса курман.

Чылай райĕçтăвкомсемпе вĕсен председателĕсем питех те ответлă пулса тăракан шкул строителĕстви ĕçне пĕтĕмпех „иккĕмĕш работниксене" шанса панă. Ку йĕркене пăрахмала, райĕçтăвком председателĕн шкул строителĕствине куллен хăйĕн тĕрĕслесе пымала, строителсене вăхăтра тивĕçлĕ кăтартусем памала.

Тутаркас районĕнчи Сĕнтĕр шкулне тума хăма тавраш 50 кубла метр турттарса хунисĕр пуçне урăх нимĕн те туман. Йетĕрне районĕнчи Шăмат шкулне тунă çĕрте кирпĕч пур, анчах йăвăç çук. Чылай çĕрте тата кирпĕч çукки ĕçе чарса тăрать. Кирпĕч илес пирки кирпĕч савăчĕсемпе тунă догăвăрсем пурнăçа кĕрсе пымаççĕ. Патăрйел районĕнчи Нĕркеч промколхозĕ Шăнкăртам шкулне тума 146 пин кирпĕч памала пулнă пулсан, пайанхи кун тĕлне пĕр кирпĕч те паман. Çавнашкалах Йетĕрне районĕнчи Палтай шкулне тăвасси те Йетĕрне савăчĕ кирпĕч паман пирки чарăнса тăрать.

Самообложени ĕçне вăхăтра пуçарманни те строителĕствă ĕçне йăвăрлататъ.

Шкул строителĕствине техникă йенчен йертсе пырас ĕçре те пăтраштарусем нумай. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ, райĕçтăвкомсем шкулсен строителĕствинчи тăшманла сăтăрла ĕççен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе мĕн кирлине туман-ха. Шкул строителĕстви çакăн пек йапăх пыни çакăн çинчен калать те ĕнтĕ.

Строителĕствă пахалăхĕшĕн кĕрешӳ йапăх пырать. Хăшпĕр районсенче строителĕствă ĕçне пачах начар, квалификацилĕ техниксем йертсе пыраççĕ. Вĕсене райĕçтăвкомсем йенчен тата Çутĕç Халăх Комиссариачĕн строителĕствă пайĕ йенчен тĕрĕслесе, ĕçре пулăшса, йертсе пырасси çук. Кунашкал йĕркесĕрлĕхе халех пĕтермеле. Шкулсене çирĕп пройектсем тăрăх, лайăх пахалăхлă тумала.

Строителĕствăра тăшманла сăтăрла ĕççен йулашкисене тĕп туса, çĕнĕ шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле пурне те пĕр тĕрĕс туса ĕлкĕртмеле. Çутĕç Халăх Комиссариачĕн, райĕçтăвкомсен, йалсовечĕсен шкулсем тăвас ĕçе мĕн пур ĕççыннисене мобилизацилемеле. Парти райкомĕсен ку ĕçе куллен тĕрĕслесе пымала.

Социалисăм тапхăрĕнчи совет ачисене дворецсем пек пысăк та çутă шкулсем туса парар!

ПСК(б)П Шупашкар хулинчи IV-мĕш конференцин делегачĕсене

ПСК(б)П Шупашкар хулинчи IV-мĕш конференци ийунĕн 1-мĕшĕнче, кăçхине 6 сехетре, Хресчен çуртĕнче уçăлать.

Конференцин кун йĕрки:

1) ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн отчочĕ.

2) Ревизи комиссин отчочĕ.

3) Суйлавсем:

а) ПСК(б)П хула комитетне,

б) Хула комитечĕн ревизи комиссине,

в) ПСК(б)П Чăваш облăç XIX-мĕш конференци делегачĕсене суйлассй.

Конференци делегачĕсене мандатсем майăн 31-мĕшĕнче тата ийунĕн 1-мĕшĕнче ирхине 9 сехетрен 3 сехетчен ПСК(б)П хула комитетĕнче параççĕ.

ПСК(б)П хула комитечĕн секретаре АХАСАВ.

Мускав хулинчи Сталинский суйлав округĕнчи ĕççыннисен 130 пинлĕ митингĕ

И. В. Сталин йулташ патне йанă çыру

Хаклă Йосиф Виссарионăвич!

Мускав хулинчи Сирĕн йатпа тăракан пирĕн суйлав округĕнче сасăланма Есĕр килĕшӳ парассине епĕр пысăккăн хумханса кĕтрĕмĕр.

Есĕр, халăх йуратса суйласа йанă çын, баллотировкăна тăма пире килĕшӳ панă хыпар, пирĕн чĕресĕне калама çук пысăк савăнăçпа тата мăнкăмăллăхпа тултарса лартрĕ, ку вăл пирĕншĕн пурнăçра чи хавăслă событи. Мускав хулинчи Сталинский суйлав округĕнчи ĕççыннисем Сирĕншĕн, тăван аслă Сталин йулташ, сасăлама пысăк шанăç тата чыс илме çĕнĕрен тивĕçлĕ пулнăшăн епĕр хĕпĕртесе мухтанатпăр.

Епĕр Сирĕншĕн, Сталин йулташ, пурте пĕр шухăшлăн тата хавас-ланса сасăлатпăр, мĕншĕн тесен Есĕр самодержавин йавар, хĕн-хурлă çулĕсенче Ленинпа пĕрле помещиклĕ-буржуалă стройа сирпĕтсе антарма, капиталисăма сирпĕтсе антарма рабочи класпа хресченсене хăйулăн та шанчăклăн çĕклентернĕ. Есĕр Ленинпа пĕрле граждан вăрçин паттăр çулĕсенче, пролетариат диктатури чаплăн çĕнтерессишĕн пĕр парканмасăр кĕрешсе, шурагвардейĕçсемпе интервентсен çарĕсене çĕнтерме çамрăк совет республикин халăхĕсене çирĕппĕн те хăйулăн йертсе пытăр. Есĕр ăслăн йертсе пынипе пирĕн çĕршыв кайа йулнă тата тĕттĕм çĕршыв пулнă çĕртен хăватлă, малта пыракан индустрилĕ державă пулса тăчĕ. Есĕр йертсе пынипе аслă ССР Союзĕнче пурăнакан халăхсен тăванла туслăхне тата пĕрлĕхлĕ ĕçлĕ çемйине туса хунă. Есĕр йертсе пынипе советсен çĕршывĕнче тĕнчипе чи пуçласа социалисăмлă обшчĕствă туса çитернĕ тата совет халăхĕн морăлĕ-политикăлă пĕрлĕхĕ пулса тăнă.

Есĕр Ленинпа пĕрле никам çĕнейми большевикла партине тупта-са турăр, вăл парти халăхăн мĕн пур тата тĕрлĕрен тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ, пире коммунисăм патне шанчăклăн йертсе пырать.

Епĕр чи чаплă çĕршывра савăнăçлă та тулли пурнăçпа пурăнатпăр. Пирĕн тăван çĕршывăн хĕвелĕ айĕнче чаплă çынсем, сталинла саманари çынсем пысăккăн ӳсеççĕ. Пирĕн социалисăмлă тăван çĕршывра çын пурнăç патне пымали телейлĕ çула çăмăллăнах тупать, хăйĕн пултарулăхĕсемпе таланчĕсене аталантармали майа çăмăллăнах тупать.

Пирĕн çĕршывра анчах çăмăллăн та ирĕклĕн сывламала, пирĕн совет халăхĕ анчах—хăйĕн кунçулĕпе хăй хуçа. Хамăрăн ытарайми паха тăван çĕршыва, хамăрăн совет çĕршывне епĕр хĕрӳлĕн йуратпăр, социалисăмлă революцине пирĕн халăх чи малтан пуçласа ăна çĕнтерӳлĕн пурнăçа кĕртнĕшĕн мухтанатпăр епĕр. Аслă ССРС, хăватлă майак пек, капиталисăм пусмăрĕнче пурăнакан етемлĕхĕн чĕрисене ирĕке тухасси çинчен хаваслă шанчăкпа тултарса тăрать, хăйĕн тăшманĕсене шиклĕхпе хăрушлăхран чĕтретсе, етемлĕхе хăйĕн пусмăрçисене хирĕç кĕрешĕве чĕнет. Фашисла вăрхурахсем кирек мĕнле урсан та, епĕр вĕсем хăратнинчен хăрамастпăр, епĕр хамăр вăйа ăнланса илсе çакна пĕлсе тăратпăр: большевикла парти йертсе пыракан совет халăхне никам та çĕнме пултараймасть.

Хамăр ретсене татах та тачăрах пĕтĕçтерсе, виçĕ революцин паттăр çапăçăвĕсемпе баррикадисенче мухтавпа витĕннĕ хĕрлĕ йалавсене татах та çӳлерех çĕклесе, епĕр Есĕр йертсе пынипе, халăхăн мĕн пур тăшманĕсене—фашисăмăн троцкисла-бухаринла агенчĕсене çул çинчен нимĕн хĕрхенмесĕр шăлса ыватса, социалисăм çĕнтерĕвĕсене ӳстерсе пыратпăр. Епĕр çакна пĕлсе тăратпăр: пирĕн кашни çĕнтерӳ хамăрăн чикĕ лешйенчи класла тăвансене хăйсене ирĕке кăларасшăн пыракан вĕсен кĕрешĕвĕнче хăватлă пулăшу пулса тăрать, пирĕн кашни çĕнтерӳ, вăл капиталисăма аркатса тăкмалах çапни, фашисла реакцин хура вăйĕсене çапни пулать.

РСФСР Верховнăй Советне суйламали кун пирĕншĕн вăйсене çĕнĕрен мобилизацилемели кун, коммунистсемпе партире тăманнисен никам çĕнейми блокĕ çĕнĕрен чаплă çĕнтерӳ тумали кун пулса тăрать.

Сирĕншĕн, Сталин йулташ, пурте пĕр шухăшлăн сасăласа, епĕр социалисăмăн Есĕр йертсе пынипе тунă пĕтĕм тĕнчипе историлĕ аслăран та аслă çĕнтерĕвĕсемшĕн, пирĕн чаплă пайанхи куншăн, пирĕн татах та ытларах паха ыранхи куншăн сасăлатпăр.

Ийунĕн 26-мĕшĕнче пирĕн республикăри ĕççынисем Ленинăн—Сталинăн аслă йалавне социалисăмăн хăватлă çĕршывĕ çийĕнче татах та çӳлерех çĕклĕç.

Çав кун пĕтĕм халăхăн праçник кунĕ пулать, совет халăхĕ хăйĕн вĕçĕмсĕр йуратуне, хăйĕн çулăмлă совет патриотисăмне, хăй коммунисла парти, совет правителĕстви тавра, хăйĕн халăхĕн аслă çулпуçĕ—Сталин йулташ тавра пĕтĕçсе тăнине пĕтĕм тĕнче умĕнче тепĕр хут кăтартса парĕ, партипе правителĕствă пĕрре чĕнсенех хăйĕн тăван çĕршывне, çавăнпа пĕрлех пĕтĕм тĕнчери ĕççынисен тăван çĕршывĕ пулса тăракан çĕршывне хӳтĕлеме çапăçăва тухма хатĕр тăнине демонстрацилесе парĕ.

Сывă пултăр ССРС—пирĕн хăватлă, никам çĕнтерейми тăван çĕршыв!

Сывă пултăр пирĕн аслă Совет Сойузĕнчи халăхсен тăванлă çемйи!

Сывă пултăр Российă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикĕ!

Сывă пултăр большевиксен коммунисла партийĕ!

Сывă пултăр коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ!

Сывă пултăр йуратнă çулпуç, тус тата учител—аслă Сталин!

1938 ИЮНЬ 1938

26

День выборов в Верховный Совет РСФСР и в Верховные Советы Автономных ССР

ВСЕ НА ВЫБОРЫ

в Верховные Советы РСФСР и АССР!

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: РСФСР Верховнăй Советне тата РСФСР-не кĕрекен Автономлă Республикĕсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ тĕлне ИЗОГИЗ кăларнă Б. Ливанăвă художницă ӳкернĕ плакат.

(Сойузфото репродукцийĕ).

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсене регистрацилени

Округри суйлав комиççисенчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидатсем çинчен пĕр майах свĕдĕнисем килеççĕ.

Ытти кандидатсем шучĕпе çаксене регистрациленĕ:

Мускав облăçĕ

Ленинский районĕнчи Л. М. Кагановичйачĕпе тăракан механичĕски савăтри литейшчик орденоносец Тихон Семенăвич Иншакăв, Луховицки районĕнчи „Красная заря" колхозри дойаркă Йекатерина Димитрийĕвнă Нартăвă.

Ленинград облăçĕ

Уторгошски МТС-нчи трактăриска Антонина Йемельйанăвнă Андрейĕвă, Н-ски пограничнăй отрйадĕнчи кĕçĕн командир Марк Онуфрийĕвич Белоцерковец.

Воронĕж облăçĕ

Алешковски районĕнчи Липйаговскри вăтам шкулта учителницă Людмила Григорйĕвнă Тафинцĕвă, Калачейĕвски районĕнчи МТС комбайнĕрĕ Васлий Васильйĕвич Мельникăв.

Иркутск облăçĕ

Пăравуспа Кривоносăв мелĕпе çӳрекен инструктăр Николай Иванăвич Носанăв, трактăр бригадин бригадирĕ Верă Матвейĕвнă Бондаренăвă.

Дагестан АСС Республикĕ

Махач—Кала-ри III Интернационал йачĕпе тăракан пир-авăр хапрăкĕнчи ватĕршчицă Марийă Йефимăвнă Золотухинă, Дагестан АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Джамалугдин Махмудăвич Магомедав. (ТАСС).

Совет халăхĕн кандидачĕсем

Çĕршыври пур республикăсемте Верховнăй Советсен суйлав кампанин татăклă тапхăрне çитсе кĕчĕç. Суйлав округĕсенче кандидатсене регистрацилесе пĕтерчĕ. Халĕхи вăхăтра пур çĕрте те суйлавçăсем хăйсен кандидачĕсемпе тĕл пуласси тата суйлав умĕнхи пысăк митингсем пулса иртеççĕ.

Тбилиси хулинчи Чукунçул суйлав округĕнчи иккĕмĕш участкăри суйлавçăсем хăйсен кандидатне—машинис Геладзе йулташа ăшшăн кĕтсе илнĕ. Довереннăй пулса ĕçлекен Çагарадзе йулташ Геладзе йулташăн биографине каласа панă.

— Николай Васильйĕвич вăл—рабочи ывăлĕ. Вăл машинис пулса вунă çул ытла ĕçлет, анчах унăн пĕр авари те пулман. Геладзе йулташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ парса наградăланă.

Калинин йачĕпе тăракан шахтă клубĕнче (Горловкă) Украина ССРеспубликĕн Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат, Донецкри медицинă институчĕн вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ, медицинă ăслăлăхĕсен доктăрĕ Иван Дмитрийĕвич Ионин хăйĕн суйлавçисемпе тĕл пулнă.

— Епĕр 1895 çулта чухăн хресчен çемйинче çуралнă,—тесе каланă хăйĕн сăмахĕнче Ионин йулташ. Йалти икĕ класлă шкултан аран-аран вĕренсе тухсан, епĕ тепĕр темиçе çултан учителсен семинарне вĕренме кĕтĕм, унтан вĕренсе тухсан, манăн шкулта илнĕ стипендийе кайала тӳлесе татас шутпа тăватă çул ĕçлемеле пулчĕ. Малашне вĕренесси çинчен епĕ шухăшламан та. Октйаберти Аслă Революци хыççăн кăна епĕ медицинă институтне вĕренме кĕтĕм.

— Халăхшăн ĕçлессинчен ытла, епĕ хам çуралнă халăхшăн, мана вĕрентсе ӳстернĕ халăхшăн ĕçлессинчен ытла манăн урăх пысăк чыс, пысăк телей çук.

Отрожскри вакунсем йусакан савăтра (Воронĕж облăçĕ) РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат—республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ Аркадий Васильйĕвич Польаков хăйĕн суйлавçисемпе тĕл пулнă.

Астраханьри Микойанăвски районĕнчи вунă пин ĕççынни РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем регистрацилесе йатпа пулнă митингра пухăннă. Астрахански—Микойанăвски округĕн округри суйлав комиççи РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Микойан йачĕпе тăракан комбинатра стахановла йухăма организацилекене—сменăри маçтăра Аннă Георгийĕвнă Королевăна регистрацилени çинчен пĕлтернине митингра пулнисем ала çупнипе кĕтсе илнĕ.

Майăн 30-мĕшĕнче Дзержинский йачĕпе тăракан культура паркĕнче Мускаври Пушкински суйлав округĕнчи ĕççыннисен суйлав умĕнхи пысăк митингĕ пулса иртнĕ. Унта 110 пин çын пулнă. ПСК(б)П Ростокински райкомĕн çекретарĕ Шерстобитăв йулташ уçса, округри суйлав комиççи Пушкински суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма Мускав Совечĕн пуранмали çуртйĕр тытăмĕн начальникне—Майорăв йулташа регистрацилени çинчен пĕлтернĕ.

Уçăмлă сăмах „Калибр" савăтĕнчи слесăр—лекальщик Корьушин йулташ каланă, вăл Майорăв йулташăн сасăлама чĕнсе каланă.

(ТАСС).

Чехословакири лару-тăру

Чехословакирен пĕлтернĕ тăрăх, Чехословаки чиккисем патĕнче Германи çарĕсене пĕрçĕрелĕ илсе пырса тултарасси пĕр майах пулса пырать. Германи çарĕн 18 корпусĕсенчен—8-шĕ Чехословаки чикки çывăхĕнче тăрать.

Фашисла Германи, Чехословаки самольочĕсем Германи чиккине пăсна, тесе йуриех провокацилле протессем туса, чикĕ хĕррипе тĕрлĕ инцидентсем туса пырассине халĕ те пăрахмасть. Прага хулинче тухакан хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Германин çар самольочĕсем Чехословаки территорийĕ çинче вуншар хут вĕççе çӳренĕ.

Йут çĕршывсенчи пичет Чехословакири лару-тăру çине пысăккăн çавăрăнса пăхать, Чехословакири лару-тăрăва питех те çивĕч те хăрушă тесе шутлать. Швейцари хаçачĕсем Чехословакири лару-тăрăва фашисла Германи Австри çине тапăнса кĕрес чухнехи пек тесе паллă тăваççĕ.

Франци пичечĕ Англипе Франци правителĕствисем Чехословаки правителĕствине хĕсеççĕ, вĕсем ăна Генлейна уступкăсем тутарасшăн,—тесе паллă туса çыраççĕ.

(ТАСС).

Орденлă Чăваш республикĕ хăйĕн Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем

Константин Назарăв

1914 çул. Тулта кĕрхи çил тă-вăллăн ахăрзшнă. Икĕ талăк хушши сивĕ çăмăр çÿçсерен такнă пек пĕр чарăнмасăр çуса тăнă.

Константин тата унăн ашшĕпе амăшĕ çĕрсе кайнă тайлăк-тайлăк хура пÿртре пурнăç çинчен йăвăррăн шутласа ларнă. Каçхи çап пÿрте çапнă. Амăшĕ кутăнк саккипек лутра сĕтел çине çурта çутса ларнă. Çавăнтах хăй вăрăммăн сывласа:

— Ыран мĕн çиййĕпер ши ачасемĕр... Кĕçĕр шыв сыпса та,—тенĕ.

— Вахтарин хуçа патĕнче есĕ урăх ĕçлеме пултараймастăп. Ун патĕнче хĕвел тухиччен пуçласа хĕвел аниччен ĕçлетĕп. Çапах выçă. Ыранхи хырăмшăн ыран куç курĕ,—тенĕ Тимахви.

— Ан хуйхăр! Хале ентĕ вунпилĕкре. Ыранах пĕр-пĕр савата, йе хуçа патне ĕçлеме кайса кĕретĕп,—ашшĕне амăшне лăпатна ывăлĕ.

— Пурăнинчен ытла вилни лайăх,—хăй йумахнех йанă ашшĕ.

— Атте, вилме кирлĕ мар! Епĕр ĕмĕтленни çитĕ! Пулĕ пирĕншĕн ĕççыннисемшĕн телейлĕ пурнăç!

Константин телейлĕ пурнăçшăн ĕмĕтленнĕ çеç мар, вăл çав ĕмĕте хăвăртрах ситерессишĕн кĕрешнĕ.

15 çулхи ача Самарти чукунçул транспарт депопе подручнăй слессара кайса кĕрет. Унта вăл кунсерен 13-шер сехет ĕçлĕттерне. Апла пулин те ĕçукçине „есĕ ача" тесе уйăхне 7 тенкĕ çеç тÿлене.

Унта вăл икĕ уйăхран ытла ĕçлесе пурăнма пултараймăн, слессăр ĕçне пăрахса, чукунçул çине стрелачнике кайса кĕрет. Стрелачникре 1916 çулччен ĕçлет.

* * *

1917 çул. Октябĕр революцийĕ. Ку вăхăтра Константин Тимофейевичĕ Назарăв çурçĕрти чукунçул транспарчĕ çинче таварнăй пойас машинисчĕн помощникĕ. Революцине вирлĕн хутшăнса ĕçлет.

1918 çулта хăй ирĕкпе Хĕрлĕ гвардине кайат. Унта броньăлă пойас çинче машиниста ĕçлет. Çапăçусенче Назарăв броньăлă пойăса пĕр паркаламасăр, парти кăтартнă пек тÿррĕн тытса пынă. Шур пойаксене Белоруссинчен тепĕ йĕрĕпе шалса ыватиччен вăл фронтра пулат.

1920 çулчченех вăл тĕрлĕрен фронтсенче пулат. Граждан вăрçи пĕтсен çеç хăйĕн таван çĕршывне таврăнат. Унтан вара 1930 çулччен пассажир пойасĕ çинче машиниста ĕçлет.

Хăй ĕçне лайăх туса пынине кура Константин Назарăва Мускаври електромеханика институтне вĕренме йараççĕ. Малтан вăл пĕтĕмпе те тăватă çул кăна вĕреннĕ, çавăнпа та малтанхи вăхăтсенчех вĕренÿре ĕлкĕрсе пыма ăна йăвăр пулнă. Вĕреннĕ çемĕн хастарлăхĕ пысăкланса пынă. Иккĕмĕш курсра вара Назарăв ытти студентсене хăваласа çитнĕ. Виççĕмĕш курсра вĕренÿ ударникĕсенчен пĕри шутланнă.

1935 çулта институтран отлично та хорошо паллăсемпе вĕренсе тухнă, инженер йатне илсе, Канашри вакунсем йусакан савăта килсе кĕнĕ.

— Хăш цеха кайатăн? — ыйтнă унран савăт строительствин начальникĕ.

— Аçта ĕç йăвăртарах, çавăнта,— кĕскен ответленĕ Константин Назарăв.

Тимĕрç цехĕ прорыва пулнă. Назарăв йултăш çавăнта кайма килĕшнĕ.

Назарăв цеха пырса кĕнĕ чухне, кунта ĕç вăйĕ çитмен. Ĕç дисциплинине кирлĕ вырăна лартман. Рабочисем пĕр-икĕ кун ĕçленĕ те, „ĕç йăвăр, услови çук", тесе кайала тухса кайнă. Стахановла йухăм çителĕклĕ пулман. Цех ĕç нормине пиххăш кварталра та 60 процентран ытла тултараймăн.

Ака, 4 çул çитет ĕнтĕ Константин Назарăв йултăш тимĕрç цехĕн начальникĕнче ĕçлеме пуçлани. Унăн цехĕ çак хушăра хытă улшăнчĕ. Ĕç нормисене стахановла тултарса пынăран Назарăв йултăшăн цехĕ хĕрлĕ йалавлă цех пулса тăма тивĕçлĕ пулчĕ.

Цехра рабочисем пĕтĕмпе 120 çын шутланаççĕ. Вĕсенчен стахановăсем—12 çын, ударниксем—25 çын. Цехри 60 çулхи рабочи Фомин йултăш йаланах хăйĕн ĕç нормине 300 процент таран тултарса пырат. Куллен тухса пыракан хаçатсене вуласа, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене вăхăтра пĕлсе тăрат. Хăйĕн политикăлла пĕлĕвне ÿстерсе пыма тăрăшат.

Дулубайăв, Димитрийăв, Миронăв, Кукулайĕв рабочисем те хăйсен уйăхлăх ĕç нормисене 250—280 процент тултарса пыраççĕ.

— Константин Тимофейĕвич килнĕренпе виçĕ çул ĕçлетĕп ĕнтĕ кунта, анчах нихăçан та пирĕн цехра рабочисем ĕçе пăрахса кайас тенине илтмен. Пирĕн ĕçленĕ çемĕн ĕçлес хаваслăх çуралса пырат,—тет Фомин.

Назарăв цехĕ 1938 çулхи иккĕмĕш квартал планне 154 процент тултарнă.

Кунта рабочисем хушшинче стахановла йухăма анлăн сарса йанă. Çавăнпа стахановецсемпе ударниксен йышĕ кунсерен пысăккăн ÿссе пынă. Цехан производства планне анăçлăн тултарса пыма пулăшат.

Рабочисем кану вăхăтне те аван ирттереççĕ. Вĕсен хăйсен клуб пур. Унта хĕрлĕ кĕтес организациленĕ. Хаçатсем вулаççĕ, радио итлеççĕ. Пушă вăхăтсенче савăнăçлă вечĕрсем туса ирттереççĕ.

Константин Тимофейĕвич производствăри стахановец çеç мар, вăл çав вăхăтрах общественăла ĕçсенче те активлăн хутшăнса ĕçлет. Çавăнпа та ăна савăтри рабочисем питех те пысăк шанчăка хураççĕ.

Канашри вакунсем йусакан савăтри рабочисен, инженерла техникла работниксен тата служăщчисен майăн 19-мĕшĕнче пулса иртнĕ 1800 çынлă аслă пухăвĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама çĕршывăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсене, ĕçхалăхĕшĕн, Ленин—Сталин партишĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен йултăшсене депутата суйлама кандидата палăтрĕ. Вĕсен хушшинче Константин Тимофейĕвич йачĕ те пур. Унăн кандидатурине Канаш хула суйлав округĕнчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ.

Арк. Нестĕрăв.

Чи çамрăккисенчен пĕри

Йекатеринă Антонăвнă—Октябĕр тантăшĕ, 1917 çулта çуралнă. Унăн биографийĕ—темиçе пин совет çамрăкĕсен кунçулĕ, шкул, колхоз, савăт. Комсомол пăхса çитĕнтернĕ ăна.

Тăватă çул кайарах Антонăвă йултăш туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Ун хыççăн 1935 çулта Йекатеринă савăта пырса кĕрет. Йалти шкулта вĕреннĕ чухне вăл çак савăта екскурçине пырса курасси çинчен ĕмĕтленнĕ. Акă вăл пайан çав савăтра. Анчах екскурçинче мар, унта ĕçлеме йаланлăхах пынă. Савăтри рабочисен çемйи çĕнĕ çынна, çамрăк хĕре ăшă кăмăлпа кĕтсе илет. Çамрăк хĕр малтанах хăйне хăйусăррăн тытат: ытлăшши калаçмаст. Анчах та цех начальникĕпе мастăр хушнисене итлет, хушнă ĕçе йаланах типтерлĕ тума тăрăшат.

Вăл йăвăç каскалакан цехра ултă уйăх хушши ученицă пулса ĕçленĕ хыççăн, станочницă пулса, хăй тĕллĕн ĕçлеме тытăнат.

— Санăн çак станок çинче сменăра 450 торцовкă татса хатĕрлемелле пулат. Есĕ хатĕрленĕ йапаласем вакунсем йусанă çĕре кайаççĕ. Нормăна тултарса ĕçлеме тăрăш, пулăшу кирлĕ пулсан хамăр так ыйт,—тенĕ ăна цех мастăрĕ. Антонăвă йултăш пĕрремĕш хут норма çинчен илтет. Пысăк пек туйăнат ăна ку нормă. Анчах вăл хăй шухăшĕнче шухăшласа: шутламасăр памаççĕ пулĕ ĕнтĕ,—тенĕ.

Çак шухăш çамрăк работницăна вăйхаллантарнă.

Малтанхи уйăхсенчех нормăна шăп та лăп тултарса пынă. Кайарахпа вăл кулленхи нормăна 150 процента çити тултарма пуçланă. Халĕхи вăхăтра кашни уйăхри нормăна 180—200 процент тултарса ĕçлет.

— Чĕр таварсем çителĕклĕ парса тăрсан, кашни сменăрах 900—1000 торцовкă татса хатĕрлеме пултаратăп,—тет Антонăвă йултăш. Халĕ ĕнтĕ вăл хăй ĕçлекен станока хăнăхса çитнĕ. Хăнăхса çитнĕ кăна мар, вăл хăйĕн станокне пĕтĕмпех тĕплĕн пĕлет. Вăхăт мĕне тăнине шута илме, кашни минутра ĕçре усă курма хăнăхнă. Канмали вăхăтра канат, хăйĕн ĕçне йуратса тăват. Çапла ĕçлесе пынипе Антонăвă йултăш савăтри паллă стахановецсен ретне тăма тивĕçлĕ пулат.

Антонăвă йултăш ĕçлекен савăтра туса кăларнă продукцине епĕр хамăрăн çĕршывра пур çĕрте те курма пултаратпăр. Чукунçулăн Канаш станцинче-и, йе Хусантан иртекен вакунсем çинче: „Канаш, ВРЗ—капитальный ремонт 193. год" маркăна курма пулат. Çак вакунсене йусас ĕçе Йекатеринă Антонăвна та хутшăннă. Вăл вакунсем пирĕн социалисăмла таван çĕршывăн пур кĕтессисене те çитеççĕ. Çав вакунсемпе социалисăм строительствине кирлĕ материалсене турттараççĕ, пирĕн таван çĕршывăн хăватне, Сталинла Конституцине сыхласа тăракан Хĕрлĕ Çар вальльи апат-çимĕçсем ăсатаççĕ. Çак мухтавлă ĕçре ĕçлесе Антонăвă йултăш пысăк чыс илчĕ.

Ахальтен мар ĕнтĕ ăна Канашри вакунсем йусакан савăтри рабочисен, инженерсен, техниксен тата служăщчисен пĕрлешÿлĕ пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртнă. Савăтри рабочисем палăртнă кандидата Канаш суйлав округне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем тата йединоличниксем те пысăк хаваспа йышăнчĕç.

Антонăвă Йекатеринă çуралса ÿснĕ Тăрмăш йал çынни колхозник Кадыкин йултăш, Канаш суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлура, Антонăвă çинчен çапла каларĕ:

— РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Антонăвă йултăша палăртнă хыпар пирĕн колхоз членĕсене çав тери пысăк çĕкленÿпе савăнтарчĕ. Пирĕн колхоз членĕсем Анто[...] йултăш кандидатурине пысăк васпа йышăнчĕç.

— Епĕ,—тет Кадыкин йулта[...] çак чаплă пухура Йекатеринă[...] нăçĕ çинчен каласа памасăр [...] пултараймастăп.

Антонăвă çемйи, ытти ĕç[...] ченсенни пекех, Октябĕр ре[...] ци хыççăн, колхозра çеç са[...] лă пурнăçпа пурăнма п[...] Авал çемйере йышлăн пулн[...] кÿнĕ. Вĕсен çемйи те йышл[...] нă. Халĕ ĕнтĕ Антонăвăсен пирĕн колхозри стахановла пулса тăчĕ. Йекатеринă А[...] нă ашшĕ иртнĕ çулта хăй ĕçлесе 805 ĕçкунĕ турĕ.

Çав канашлурах Канаш[...] сем йусакан савăтăн тавар [...] бинатĕнчи мастăр Перфилйĕв й[...] таш хăйсен кандидачĕ пирки [...] са каларĕ.

— Пирĕн çĕршыв, коммунис[...] парти тата йуратнă Сталин [...] сем вĕрентсе çитĕнтернĕ ывăл[...] рĕсене тивĕçлипе хаклама пĕл[...] çĕ. Пирĕн савăтри рабочисем, [ин]женерсем тата техниксем РСФ[СР] Верховнăй Советне суйлама [...] лин йултăшпа унăн çывăх сора[тни]кĕсен кандидатурисене тăрат[...] пĕрлех хамăр савăтри паллă ст[аха]нăвкăн—Антонăвă йултăш ка[нди]датурине те палăртрĕç. Мĕн[...] ха епĕр Антонăвăна РСФСР [Вер]ховнăй Советне хамăр депута[та] са йарасшăн? Антонăвă йул[таш] пирĕн савăтра 4-мĕш çул ĕçл[ет]. Вăл йалти чăваш хĕрĕсен йыш[...] чен савăта килсе, пирĕн çемйер[...] рабочисен йышĕнче ÿссе çитĕн[...] Пирĕн рабочисем унăн ĕçе çі[...] пăхса савăнаççĕ. Вăл хăйĕн ĕç[не] типтерлĕ тăват тата йуратса [...] лет. Пирĕн савăтри паллă ста[ха]нăвкă производствăра çеç мар, о[б]щественăла ĕçсенче те пĕтĕм чĕр[е]рен тăрăшса ĕçлет. Вăл—хула с[о]вет членĕ.

Çакăн пек Сталин саманинче [...] се çитĕнекен аруван мухтавлă [...] нисем пирĕн савăтра пĕрре [...] мар, вĕсем нумайăн шутл[...] Çав нумайăшсенчен пĕрне, йăхăхисенчен лайăххине К[...] вакунсем йусакан савăтăн коллективĕ РСФСР-ăн Ве[рховнăй] Советне депутата суйлама [кан]дата палăртрĕ.

Канаш суйлав округĕнчи ĕççы[н]нисем Антонăвă йултăша пысăк государствă ĕçне шанса пара[ççĕ]. Халăх шанчăкĕ. Совет çамра[...] семщĕн çакăнтан хакли урăх [...] мĕн те çук! Таван çĕршыв—ныс[...] шĕн, унăн хăвачĕшĕн халăх шанса пана ĕçĕн ответлăхне пĕтĕм чĕререн туйса илет вăл.

— Халăх шанчăкне ĕçре кăтартăп, вăл чыслăха вараламăп,—тет Антонăвă.

М. Митрофанăв.

Совет халăхĕн савăнăçĕ

Пĕтĕм çĕршыв тăрах нумай пин çынлă митингсем пулса иртеççĕ

Партипе правительствă руководителĕсене союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленни çинчен пĕлтернĕ хыпара ĕççыннисем калама çук пысăк савăнăçпа кĕтсе илнĕ.

Нумай çынлă митингсемпе пухусем пулса иртни çинчен çĕршывăн пур вырăнĕсенчен те пĕлтереççĕ. Ĕççыннисем митингсенче хăйсем тухса каланисенче пĕтĕм совет халăхĕн кандидачĕшĕн Сталин йултăшшăн, унăн çывăх соратникĕсемшĕн, таван çĕршывăн чи чаплă ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн—коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕмĕрейми блок кандидачĕсемшĕн мĕн тери пысăк хаваслăхпа сасăлама пулни çинчен каласа параççĕ.

Ашхабадри 60 пин ĕççынни хулари митинга пухăннă. Митингра тухса калана Тельушенко, Рамазанăв йултăшсем тата ыт. те Сталин, Молăтăв, Андрейĕв, Ворошилăв, Йежов йултăшсем Туркмен халăхне шанни тата чыслани вĕсене татах та темĕн пек хавхалантарни, çĕклентерни çинчен каласа панă. Митингра пулнисем хăйсен шухăш-кăмăлне Сталин, Молăтăв, Андрейĕв, Ворошилăв, Йежов йултăшсен йачĕсемпе хĕрÿлĕн саламласа çыру йаниниче кăтартса панă.

Ташкентри пĕтĕм хулари митинга 100 пин çын пулнă. Митинг халăх праçникĕ йевĕрлех пулса кайнă.

Сталинградри ĕççыннисем Сталинград хулинчи Трактăр савăт суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Климент Йефремăвич Ворошилăва регистрациленине калама çук пысăк митинг тунипе паллă тунă.

Праçник чухнехи пек илемлетнĕ хулари площчĕтсенче хĕрлĕ йалавсемпе, лозунгсемпе, йуратнă Сталинăн, партипе правительствă руководителĕсен портречĕсемпе 180 пин çын пухăннă. Митингра пулнисем Ворошилăв йултăш патне çыру йама йышăннă.

Нумай çынлă митингсем Хусанта, Сталинабадра (Таджик ССРеспубликĕ), Ижевскра (Удмурт АСС Республикĕ), Дон-çи-Ростовра тата çĕршыври ытти хуласенче те пулса иртнĕ. (ТАСС).

Колхозниксем пулăшаççĕ

Майăн 26—27-мĕш кунĕсенче чукун çул линине Катраç йалсоветне кĕрекен çĕр çинче хучĕç. Ишлей районĕнчи „Париж Коммунĕ" тата „Хĕрлĕ Октябĕр" колхозсен колхозникĕсем ĕçе тухса çул полотнине аван йусаса пачĕç. Çавăн пекех Хĕрлĕ Йавăш колхоз председателĕ М. Петухов йултăш тăрăшнипе колхозниксем кăтартулă ĕçлерĕç.

Анчах чукун çул строительствине ним шута хуман çынсем те пурха. Акă, илес Катраç йалпоне. Вăл чукунçул линине хурса йалпо патнех çывхарнине те сисмен пулас,—ун лавкинче çул çинчи рабочисене илме спичкă та çук.

Шупашкар районĕн çĕрĕ çине лини хурса çитеççĕ. Лини хывакан рабочисем Шупашкар районĕнчи колхозниксем те, районри организацисем те лини хурас çĕрте пысăк пулăшу парассине шанаççĕ.

А. Шаронăв.

Аннă Михайлăвă

Пăла шывĕ хĕрринче мухтавлă Крецков командира шурă бандитсем штыкпа тирсе силленĕ чухне, Аннă пурнăç мĕн иккенне те тавçăрса илеймен-ха, вăл тантăшĕсемпе пĕрле пукăниле вылянă. Вăл 1913 çулта Патăрйел районĕнчи Шăхран йалĕнче çуралнă. Вĕсен килĕнче кивĕ çăкăр чĕлли çенни патне арантарах çиткелесе пынă. Асăп çул çинчех, кĕтмен çĕртен сиксе тухат, теççĕ. 1914 çулта, пĕр çулхи Аннă сăпкара сикнĕ чух, ашшĕ вилет, вара амăшĕ икĕ ачапа тăлăха йулат. Пурнăç пурйенчен те йухăнма пуçлат. Нумай та иртмест, хуçине кĕтсе кĕçеннĕ лаша карти пушанса йулат. Çаврăçил иртет, кĕлет çийĕнчи улăма сÿсе пăрахат, ăна витме те хал çук.

Аннă вĕренме шухăш тытат,—йалта шкул çук. Кÿршĕри пĕр-пĕр йала кайасчĕ. Анчах Аннăн çаварни кунĕ урама тухма та сăхман çук. Йалти пĕр хресчен хăйĕн килĕнче ачасене пухса вĕренткеленĕ, унта хутран-ситрен Аннă та çÿрекеленĕ, анчах „азбуки-буки-веди, веди глагол вăрманта" тени-сĕр пуçне, урăх нимĕн те вĕренеймен. 1927 çулта вăл ликпунктра 6 уйăх вĕренет.

Пĕрисем пирĕн çĕршывра самолетпа çисĕм пек хăвăрт вĕççе, теприсем çăмăр пĕлĕчĕсем пăрăнса иртекен Ельбрус тăррине хăпарса паттăра тухаççĕ. Чукунçултан инçетре ларакан пĕчĕкçĕ йалта Аннă йатлă хĕр ÿссе çитĕнет...

Аннăпа амăшĕ колхоза 1931 çулта кĕнĕ. Тăшман лире хирĕç хăйĕн асав шăлне хăйрана. Кулаксем пăтратса пынипе, 1932 çул тĕлне колхозра 32 хуçалăхран пĕтĕмпе те 3 килĕ кăна тăрса йулат. Колхоз председателĕ ерех кĕленчисене пушатнă, урамра йăваланса çÿренĕ ÿсĕр куçа „таракансем те ылттăн пек курăннă". Аннă ку вăхăтра коньухра ĕçленĕ. Кăшт ала пусма пĕлекен Аннăна колхозниксем виçĕ килĕлĕ колхоз председательне суйлаççĕ. Вăл кунĕн-çĕрĕн шухăшлат, хĕрарăмсемпе калаçат. вĕсене колхоза кайала кĕме ÿкĕтлет. Йепле те пулин колхоза çĕклемеле!

Колхоз тăшманĕсем шăлйĕрсе кулнă. 18 çулхи хĕр—колхоз председателĕ. Аннă хĕрсе ĕçлеме тытăнат, колхоз йышĕ куллен ÿссе пырат. Анчах тăшман та хайарланнăçсем хайарланнă, колхоза кĕрсе, ăна шалтан кăшласшăн пулнă.

Чукмарăв Арçенти пур колхозниксене те Аннăна хирĕç тăратасшăн хыпăнса çÿренĕ, ĕç тухманнине кура, вăл пĕрре колхоз правленине кĕрет те Аннăна хăваласа кăларса йарат, пĕр суйлавсăр-мĕнсĕр председатĕл вырăнне хăй ирĕкĕпе йышăнат. Каллех кулак тамаши пуçланат. Колхоз ĕçĕ сисĕнмелех кайала кайат. Анчах колхозниксем Чукмарăв урапине питшалах кĕрсе кайма памаççĕ,—председательте—каллех Аннă. Калтана ура пуссан, вăл хÿрине нăрахса пулин те тарат. Тăшман та çапах.

1934 çул „пĕтрав" кунĕнче пĕр хĕрĕнкĕ старик урамсем тăрăх хашкаса çÿрет, кашни чÿрече умĕнче чарăнса пурне те пухăва йыхăрат. Аннă ăна тĕл пулат. Мĕнле пуху? Чукмарăв ушкăнĕ колхоза салатас пирки пуху тăвасшăн иккен. Аннă хашăлти васкав старике чарат.

Çав самантрах Чукмарăв Арçенти пиччĕшĕ тайкалана-тайкалана урама сиксе тухат. Вăл Аннăна чăркăша кĕрсе хĕнесшĕн, унтан ăншăртне пусараймасăр колхоз счетоводне çапса йарат те хăйех караул кăшкăрат. Унăн тусĕсем пурте, йурийех ĕçсе ÿсĕрĕлнĕскерсем, кĕтмен çĕртенех сике-сике тухаççĕ, хăшĕ çĕçĕ, хăшĕ чукмар йатнă. Аннăна çухинчен тытса силлеççĕ. Çав вăхăтра колхозăн пĕр коньухĕ лашапа урам тăрăх иртсе пынă. Аннă коньухран лашана илет те утланса сиккипе айаккала вĕçтерет, пĕр йултăшĕн кĕлетне кайса пытанат...

... Хирте сап-сарă тырă хумханнă. Жнейкăсем пĕр вĕçĕмсĕр сăрăлтатнă. Анчах чипер ĕçлесе пынă çĕртех малтан пĕр жнейка çĕмĕрлет, унтан—тепри. Тырă ăшне пысăк шалчасем çапса лартнă. Енер çăмăр çунă, пайан ирхине утнă çын йĕррисем нÿрĕ çĕр çинче йăртах курăнса выртаççĕ—кунта тăшман çÿренĕ.

Тăшмана йĕрлесе тупмала, ăна нихçан çĕкленейми таптамала, тымарĕ йулмиччен пĕтермеле. Аннă комсомолецсене пухса канашлат. Шалчасем тунă чухне турпассем йулнах, çав йĕрпе кайса, çĕлен пек чейе тăшмана тытмала. Аннă шухăшĕ чăнах та тÿрре тухат. Чукмарăв тусĕ Никифăрăв Виктăр картишĕнче вĕрçĕнĕ турпассем выртаççĕ. Ирсĕр тăшмансене çапса хуççан, колхоз вăйлă утăмсемпе малала кайат.

Аннă Михайлăвнă хăйĕн колхозĕнче кăна мар, районри ытти йалсенче те пĕтĕм чĕререн ĕçлет, государствăна тивĕç парăмсене тÿлеме чаракан кулакла саботажпа кĕрешет. Вăл мĕн чухлĕ хытăрах ĕçлет, çавăн чухлĕ ăна тăшман курăймаст.

1936 çулхи пĕр кĕрхи каç кÿршĕри Виçпÿрт йалĕ çинче çулăм йалкăшнине курат Аннă. Вăл çавăнтах комсомолецсене пухса, пушар сÿнтерме кайат. Кунта Долгов Гераçим колхозникĕн пÿрчĕ çунат иккен. Аннă пушара сÿнтерме чунĕнчен тăрăшса чупат, пĕтĕм халăха чĕнет. Анчах кунта та тăшмансем хăйсен хайарлăхĕпе ирсĕрлĕхне кăтартаççĕ. Вĕсем Аннăна, вăл халăха пăтратса çÿрет тесе, вута пăрахса çунтарма сĕтĕреççĕ,—паттăр хĕре йал халăхĕ хăтарат.

...Хĕрлĕ тутăр сыхнă, йунгштурм костюмĕ тата атă тăхăннă пĕчĕкрех кĕлеткелĕ хĕр пĕтĕм Патăрйел районĕнче паллă. Тăшмансем ăна вутта пăрахса кĕл туса вĕçтерме, çул çинче вĕлерме тăрсан та, вăл хуйха-суйха ÿкмест, йемйешĕл хир тăрăх утнă чухне те, хăйĕн ачине йатса утăкка тунă чухне те, бригадирпа калаçнă чухне те унăн сăнĕнче вăл хĕрÿлĕ кĕрĕшÿ витĕр тухни курăнат, вăл хăйĕн ĕçне тĕрĕс туса пынине ăнланат, çĕнтерессине йаланах шанат.

Аннăн кивĕ тайлăк-тайлăк пÿрт пулнă. Вăл тăрăшса ĕçлесе, çĕнĕ лайăх пÿрт лартат, карнисĕсене ерешлет. Пÿрте туса пĕтернĕ, платниксем йулашки пăтасене çапнă. Аннă ыран пÿрте пурăнма кĕмеле. Çав каçхине Аннă, çĕнĕ пÿрте йĕри-тавра тĕплĕн пăхса çаврăнсан, платниксен ĕçне пахаласа йышăнсан, комсомол пухăвне тухса кайнă. Пуху 12 сехетчен тăсăлнă. Ийунь каçĕ çăлтăрсемпе выльанă. Çанталăк ывăннă пек лăпкă сывăрнă. Комсомолецсем пухуран тухаççĕ те Аннă картишĕнчи кĕлет йалкăшса çуннине кураççĕ. Çуртра вăл вăхăтра никам та пулман, вут тĕртесси—паллах, тăшман ĕçĕ. Хăйĕн йуратнă председателĕн суртне вутран çăлса хăварас тесе, колхоз халăхĕ ачи-пăчипе Аннă кил-çуртчĕ патне чупса пыраççĕ. Хĕрарăмсем, пĕтĕм ватти-вĕтти шыв йăтаççĕ. Дмитрийĕв Ильйе колхозник пÿрт çунма тытăннине курсан, вут ăшнех кĕрсе кайат, унăн тумтирне вут тивет, анчах вăл, хăйĕн çине шыв йара-йара, алхасса кайнă вутпа кĕрешме вĕçне çитиччĕнех чарăнмаст. Çапла пĕтĕм колхоз халăхĕ хăйĕн председателĕн пÿртне вутран хăтарат.

Аннă çак хайар кĕрешÿре аллине усмасăр ĕçленĕ, 1932 çулта колхоз председателне суйласанах, ала пусма кăна пĕлнĕ пулсан, вăл халĕ ала пусма кăна мар, пысăк хутсене те çырат, „Известия" тата ытти хаçат-журналсене вулат, Китай самольочĕсем Йапони çарĕсем çине пĕлĕт пек хупласа пырса тапăнни çинчен колхозниксене хаваслăн каласа парат. „Нумай пулмаст-ха, колхоза кĕриччен, вăл хăйĕн районĕнчен çапата кантри тăршшĕ те инçете кайса курманччĕ. Вăл чи малтан 1933 çулта Шупашкар хулине килсе курнă. Аннă, ĕлĕкрех Шупашкар çинчен йурă çеç йурланă хĕр, Шупашкар урамĕпе утнă. Çав çулах ăна Чăваш республикĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ лайăх ĕçленĕшĕн преми панă, çавăн чух вара Аннă малтанхи хут пăрахут çине ларса курнă. Малтанхи хут унăн умĕнче Атăл хумĕсем хуçăла-хуçăла шавланă, пăрахут кайутинче пысăк куçкĕскисем унăн сăнне хăйне кăтартнă. Астăвăр-ха, ĕлĕк чăваш хĕрĕсем хăйне куçкĕски витĕр пăхайман, фотограф умĕнче тăрайман. Ĕçлесе туçанланса килнĕ хыççăн, хĕрсем урама тухма йусанас тесе, витрери шыв çине пăхнă. Ÿссе çитĕннĕ, вăйăсенче тутăрсем сĕлтсе ташланă, шыв пек йухакан йурăсем йурланă, кайран вара пĕркенчĕк айĕнче йĕрнĕ, шăпăрçа ура тапса шăпăр каланă. Сывă йул, çамрăклăх! Лепереле—тĕпелти турчăка, час-часах упăшка саламачĕ... Аннă хĕрарăмăн ĕлĕкхи пурнăç шăпи çинчен кол[...]хозра калат, вăл хăйĕн сăмахĕнче телейсĕр те харсăр Силпи хĕрне Нарспийе асăнат. Колхозра тăшмансем темиçе çул чарса пырсан та Пушкин йачĕпе тăракан колхоз иртнĕ çул ĕçкунĕ пуçне 10-шер килограм валеçнĕ. Çак çитĕнÿсем колхоз руководителĕпе унăн йышĕ килĕштерсе ĕçлениченчен, пĕрне-пĕри сума суса, хисеплесе пурăннинчен килет.

Ĕлĕкхи саманара етем çине ете[...] кăшкăрла пăхнă. Пĕр пус çи[...] чул айĕнче выртат,—тенĕ, пĕр пу[...] шăн пусма хатĕр пулнă. Аннăн[а] халь унăн ĕçĕнче пĕтĕм колхо[з] йышĕ пулăшат, шанса тăрат.

Çак хĕрÿлĕ ĕçре Аннă хă[...] мухтавлă пултарулăхне палăрта[...] колхоз йышне 3 килĕрен 42 ки[лĕ] çитерет, колхоз хисеплĕхне пĕтĕ[м] район умĕнче çĕклет. Аннă, ĕлĕкх[и] патша саманинчи йалта пулнă пул[...]сан, турчăка умĕнчен хăпайма[...] пулĕччĕ. Халь вăл, пирĕн Сталинл[а] Конституци саманинче государствă ĕçне тăвакан хисеплĕ çын пулса тăчĕ. Вăл 1934 çултанпа Чăваш Тĕпĕçтăвком членĕнче, Патăрйел райĕçтăвком членĕнче тата 1938 çултанпа райĕçтăвком президиум членĕнче тăрат.

Вăл чăваш халăхĕн пултарулă хĕрĕ, аслă Ленинпа Сталин партийĕн ĕçне чунтан туса пыракан çын. Татмăш йалĕнчи „Восток" колхоз членĕсем Аннă Михайлăвнăна, Пушкин йачĕпе тăракан колхоз председателне, Чăваш республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртрĕç. Туçа округĕнчи суйлавçăсем ку хыпара хаваслăн йышăнчĕç.

Ухсай Йаккăвĕ, Аркади Ĕçхĕл.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Куславкка районӗнчи парторганизацин пухӑвӗ

Районри парторганизацин отчотпа суйлав пухӑвӗ 4 кун хушши пычӗ. ПСК(б)П райком отчочӗ тӑрӑх 30 коммунис тухса каланӑ. Районри парторганизаци партине совет тата хуҫалӑх организацисене ташманӗсенчен тасатас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса иртерӗ. Районри партипе совет тата хуҫалӑх организацийӗсене коммунистсенчен 47 ҫын, партире тӑманнисенчен 34 ҫын ҫӗнӗрен ӗҫе лартнӑ. Кунсӑр пуҫне тата комбината 23 ҫынна йӗртсе пыракан вырӑнсене ӗҫлеме лартнӑ. Ҫултталӑк хушшинче 27 ҫынна парти ретне илнӗ, 17 кандидата члена куҫарнӑ. Ҫакна шута илсе пуху райком ӗҫне ҫителӗклӗ тесе хак пачӗ.

Ҫакӑнпа пӗрлех районри парторганизаци ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Партин вӗрентӗвне начар йӗркеленӗ. Коммунистсем нумайӑшӗ кружоксенче йӑнӑшсене вӗҫӗнчен кӑна тӑрасҫӗ; зањатисене ҫӳремесҫӗ. Районри парти активӗ вӗренмест. Райком ҫекретарӗсем „комбинатра парти вӗрентӗвне лайӑххӑн йӗркеленӗ" тесҫӗ. Анчах фактсем урӑхла каласҫӗ. Райкомӑн штатлӑ пропагандисӗ Коњков йулташ каланӑ тӑрӑх, комбинатри коммунистсем те пурте зањатисене ҫӳремесҫӗ. Ака, Жиклайӗв, Максимӑв йулташсем ҫулталӑкра та икӗ зањатире ҫеҫ пулнӑ. Николайӗв коммунис (комбинатри бухгалтӗр) зањатисене вуҫех ҫӳремест. Вӑл районри отчотпа суйлав пухӑвне те ним сӑлтавсӑрах пыман. Кружоксене ҫӳрекен коммунистсем те зањатисене хатӗрленсе пымасҫӗ. Парти райкомӗ парти вӗрентӗвне йӗртсе пырассине пӗтӗмпех кулђтпроп пуҫлӑхӗ Матросӑв йулташа шанса панӑ. Парти кабинечӗ те пропагандистсене ӗҫре кирлӗ пек пулӑшса пымасть: ҫеминарсем йӗркелӗ иртмесҫӗ, консультаци ӗҫне йӗркелемен.

ПСК(б)П райкомӗ ССР Союзӗн Верховнӑй Советне суйлана вӑхӑтра ӗҫленӗ агитатӑрсене сухатса пӗтернӗ. РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйламалли Положенисене вӗренес ӗҫе начар йӗркеленӗ. Суйлав Положенине вӗренмели кӗнекесене участоксене ҫитермен, плакатсем, лозунгсем ҫук. Воробйовкӑ, Карач, Кармӑш йалӗсенче суйлав Положенине уйра вӗрентетпӗр, тесе ӗҫлемесӗр ларнӑ. Ку ӗҫе уйра та йӗркелемен. Чылай ҫӗрте суйлавҫӑсен списокӗсене пичет пусмасӑрах кӑларса ҫапнӑ. Спискӑсене пӑсса пӗтернӗ. Хушамачӗсем пур, йачӗсем ҫук, йе хӑҫан ҫуралнине кӑтартман. Апла пулсан та доклатчик суйлав кунӗ мӗнле хатӗрленни ҫинчен пӗр сӑмах та каламарӗ.

Ҫавӑн пекех парти райкомӗ уйрӑм коммунистсемпе, сочувствующисемпе, партире тӑман активпа ӗҫлессине, вӗсене вӗрентӳ, ӗҫре пулӑшса пыни ҫук. Райком инструкторӗсем нимрен ытла жалӑбасем ҫинче лараҫҫӗ, пуҫламӑш парторганизацисене начар пулӑшаҫҫӗ. Пуҫламӑш парторганизацисен шучӗ чакса пырать. Иртнӗ ҫулта 14 пулнӑ, халӗ 12 йулнӑ. Кандидатсен групписем 7 пулнӑ, халӗ 2 ҫеҫ.

ПСК(б)П райкомӗ хӑйӗн ларӑвӗнче сӳтсе йавмали ыйтусене малтан тӗплӗн тӗрӗслесе хатӗрлемест. Райком бюровӗ тата партин пуҫламӑш организацисен пухӑвӗсем йышӑннӑ постановленисене пурнӑҫланине тӗрӗслесе пыман.

ПСК(б)П райкомӗ партилӗ-политикӑлӑ ӗҫе хуҫалӑх ӗҫӗсемпе ҫыхӑнтарса пырайман пирки район кайри вырӑна тӑрса йулма тапратнӑ. Районра государствӑна аш-какай тӑратас ӗҫ кайа йулнӑ. Ку ӗҫе уйрӑм коммунистсем (Николайӗв, Орлов, Петров, Йегорӑв т. ыт.) хӑйсем чӑрмантарса пыраҫҫӗ.

Куславкка районӗнче кӑҫал ҫур акинче агротехникӑна пӑсса ҫеленӗ. Пӗтӗм тырра машинӑпа акас вырӑнне 25 процентне алӑпа акнӑ. Ҫураки вӑхӑтӗнче трактӑрсем ӗҫлемесӗр ларнӑ. МТС-ӑн райҫӗрӗс пайӗн пуҫлӑхӗсем хӑйсен начар ӗҫӗсене партин Ҫӗрӗс Халӑх Комиссариачӗ тата парти райкомӗ ҫине йӑвантарма пӑхаҫҫӗ. Райҫӗрӗс пайӗн пуҫлӑхӗ Бруснӑкӑв йулташ ӗҫрен тухса кайас шухӑшпа ӗҫлет. Ун ҫинчен вӑл пӗрре кӑна мар райкома ыйту лартнӑ. Ахаљтен мар ӗнтӗ: „Пирӗн районра ҫӗрӗс пайӗ пур-и, ҫук?"—тесе ыйтать Йусупӑв парторг.

Тухса калакансем районри сутуилӳ организацисем чӑтма ҫук начар ӗҫленине палӑртрӗҫ., 6 сутуилӳ организацинчен 5-шӗ кӑҫал убытка панӑ. Растратӑсем ӳссе кайнӑ. Йанварӗн 1-мӗш тӗлне 96 пин тенкӗ растратӑ пулнӑ. Хаљхи вӑхӑтра растратӑ пирки 98 ӗҫ халӑх сутӗнче выртать, вӗсене вӑхӑтра пӑхса тухмаҫҫӗ. Пӑхса тухнӑ ӗҫсем тӑрӑх та пӗр пин тенкӗ анчах шыраса илнӗ. Ҫмирнов сутисполнител хӑй пӗр пин ытла растратӑ туна.

Ҫак ҫитменлӗхсем вӗсем парти райкомӗ йӗртсе пырас ӗҫе тӗрӗс организацилеменнинчен килнӗ. Кунта райком решенийе кашни ҫекретаре уйрӑм ӗҫсем парса тухнӑ. Сӑмахран, райкомӑн пӗрремӗш ҫекретарӗн—йалхуҫалӑх, иккӗмӗш ҫекретарӗн—промышленнӑҫ, виҫҫӗмӗш ҫекретарӗн—културӑ строительствипе йӗртсе пымала туна.

Райкомӑн ҫӗнӗ составне 17 ҫын суйласа хӑварчӗҫ. Вӗсенчен 4-шӗ кивӗ составра ӗҫленӗ. Партин облӑҫри конференцине кайма сасӑлакан сасӑпа 8 делегат, канашлакан сасӑпа 2 делегат суйларӗҫ. Райком пленумӗ членӗсене вӑрттӑн сасӑласа суйлас умӗн шутлав комиссин председателӗ Хуртин йулташ: „Райкома 17 ҫыннӑн, ревизи комиссине 5 ҫыннӑн сасӑламалине ан манӑр" тесе партин йӗртсе пыракан органӗсене суйламали инструкцине пӑтраштарма пӑхрӗ. Ку йӑнӑша пуху ҫийӗнчех тӳрлетрӗ.

Райкомӑн пӗрремӗш пленумӗ райком бюровне 7 ҫынтан суйларӗ. Райкомӑн пӗрремӗш ҫекретарне Антонӑв йулташа, иккӗмӗш ҫекретарне Желтухин йулташа, виҫҫӗмӗш ҫекретарне Липатӑв йулташа суйларӗ. Районри хаҫат редактӑрӗ пулса ӗҫлеме Петров йулташа, кулђтпроп пайӗн пуҫлӑхне Матросӑв йулташа суйланӑ.

П. Перлов.

Райкома ҫӗнӗ ҫынсене суйларӗҫ

ЙӖЛЧӖК (хамӑр корр.). Майӑн 26-мӗшӗнче пуҫланса 28-мӗшӗччен Йелчӗк районӗнчи парторганизаци пухӑвӗ ӗҫлерӗ. Пуху ПСК(б)П Обкомӗн отчотне (Обкомӑн шкулсен пайӗн пуҫлӑхӗ Судаков йулташ доклад турӗ) тата ПСК(б)П райкомӗн отчотне (Сахалкин йулташ доклад турӗ) итлесе сӳтсе-йаврӗ, райкомӑн ҫӗнӗ составне суйларӗ.

ПСК(б)П Обкомӗпе райкомӑн отчочӗсене коммунистсем калама ҫук активлӑ сӳтсе-йаврӗҫ, ӗҫри ҫитӗнӳсемпе ҫитменлӗхсене палӑртрӗҫ, сӗнӳсем нумай пачӗҫ. ПСК(б)П Обкомӗн отчотне сӳтсе-йавнӑ хыҫҫӑн, пуху:

— ПСК(б)П Обкомӗн ӗҫӗсем ҫителӗклӗ, политикӑлӑ ҫул-йӗрӗ тӗрӗс, тесе йышӑнчӗ.

* * *

ПСК(б)П райкомӗн ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсене коммунистсем уйрӑмах ҫивӗччӗн тишкӗрчӗҫ. Пуху ҫӑлнӑ кун тӗлне районра сакӑр колхоз иртнӗ ҫулхи тырра ҫапса пӗтермен. Иртнӗ ҫулта тырӑ нихҫанхинчен вӑйлӑ пулнӑ пулсан та, натурплатӑна тата кивҫен илнӗ вӑрлӑха хаљ те парса татман. Ӑслӑ Йелчӗк колхозӗн фермивче 200 нуҫ сысна ӳксе вилнӗ. Ҫав колхозрах 700 пӑт ҫӗрулми ҫӗрсе кайнӑ...

Мӗне пӗлтереҫҫӗ-ха ҫак асӑннӑ фактсем? Вӗсем райком ӗҫсене тивӗҫлипе йӗртсе пыманнине пӗлтереҫҫӗ. Райком ҫӗрӗҫ пайӗ ҫине шанса ларнӑ,—ҫӗрӗҫ пайӗ йалхуҫалӑхӗнчи сӑтӑрлӑха пӗтерес тесе нимӗн те туман.

— Пирӗн районри ҫӗрӗҫ пайӗ алсӑрпа пӗрех,—сыснасене прививкӑ тумалине илме те Канаша райкомӑн иккӗмӗш ҫекретарӗ Макарӑв йулташ кайса килчӗ (Ҫмирнов йулташ).

Райком машинӑ-трактӑр станцине те йӗртсе пыман. Пухура Миронӑв йулташ каланӑ тӑрӑх, МТС работникӗсем:

— Епӗр райкома ҫӳреме те пӑрахатпӑр, пирӗнпе унта сулхӑн калаҫаҫҫӗ, тенӗ.

Паллах, ун пек тунӑ пулас пулсан, МТС работникӗсем йӑнӑш тунӑ пулӗччӗҫ, анчах вӑл райкомӑн ӗҫри ҫтилӗ мӗнле пулнине лайӑх кӑтартса тӑрать ӗнтӗ.

Районра халӗ те ӗнесӗр колхозник килӗсем 17,5 процент, выљӑхчӗрлӗх усраман колхозник килӗсем 5 процент.

Халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫӗ те кирлӗ пек йӗркелемен. Районра 9 врач пулмала, хаљхи вӑхӑтра пурӗ те 2 врач ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ.

Райком ҫекретарӗсем пулнӑ йулташсем (Сахалкин, Макарӑв) хуҫалӑх ӗҫӗсене политикӑлӑ ӗҫсенчен уйӑрма ҫуккине ӑнланса илмен пулнӑ. Вӑл акӑ мӗнрен лайӑх курӑнса тӑрать. Кучков йулташ, вӗренме кайас умӗн, хӑй вырӑнне колхоз председателне кама хӑварасси ҫинчен калаҫма райкома пынӑ. Ӑна райкомра:

— Партилӗ ыйтупа калаҫма кунта кил, ку ыйтупа ҫӗрӗҫ пайне кай, тесе каласа йанӑ. Ҫак сӑмахсем ӑнсӑртран тухнӑскерсем мар.

ПСК(б)П райкомӗ партилӗ-политикӑлӑ ӗҫсене те ҫителӗксӗр туса пынӑ. 1938 ҫулта кӗнӗрен пурӗ те парти кандидатне 10 ҫынна илнӗ, 8 ҫынна парти кандидатӗнчен члена куҫарнӑ. Парти членӗсемпе кандидачӗсене воспитани парас ӗҫе те ҫителӗклӗ туса пыман.

Райкомӑн чи пысӑк йӑнӑшӗ—Филиппӑва (иртнӗ вӑхӑтра райком ҫекретарӗ пулнӑ) тата Дмитрийӗва (райӗҫтӑвком председателӗ пулнӑ), нумай вӑхӑт хушши сӑтӑр туса пурӑннӑскерсене, партирен кӑларнӑскерсене, кайала партийе илме хатӗрленни пулнӑ. Кунӑшӑн пухура райком работникӗсене тивӗҫлипех пит хытӑ тишкӗрчӗҫ.

Сахалкин (райкомӑн пӗрремӗш ҫекретарӗ пулнӑ), Макарӑв (иккӗмӗш ҫекретарӗ пулнӑ), П. Оҫипӑв (районри хаҫат редактӑрӗ пулнӑ) кандидатурисене пуху вӑрттӑн сасӑламали кандидатурӑсен спискине те кӗртмерӗ. Райкомӑн ҫӗнӗ составне пуху 9 ҫынтан,— пӗтӗмпех ҫӗнӗ ҫынсене суйларӗ.

Ҫӗнӗрен суйланӑ райкомӑн ларӑвӗ райкомӑн пӗрремӗш ҫекретарне Шакӑв йулташа, иккӗмӗш ҫекретарне Прокопйӗв йулташа, виҫҫӗмӗш ҫекретарне Ҫтепанӑва йулташа (МТС-ра ӗҫленӗ), районри хаҫат редактӑрне Волкӑв йулташа суйларӗҫ.

Ф. Александрӑв.

ССР Союзӗн орденӗсене пани

Майӑн 24-мӗшӗнче ССР Союзӗн Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин йулташ Президиумӗн чылай членӗсемпе пӗрле Хӗрлӗ Ҫарӑн наградӑланӑ командирӗсемпе политработникӗсене орденсем панӑ.

Орденсем — комбриг Кирӳхин йулташ, полковник Честохвалӑв йулташ, майор Чумаков йулташ, капитан Барцалкин йулташ, политрук Бойарщинӑв йулташ, пӗрремӗш рангри ҫар инженерӗ Горский йулташ, пӗрремӗш рангри ҫар техникӗ Волђгачев йулташ тата ыттисем те илнӗ.

Кӗске сӑмахпа полковник Честохвалӑв тухса каланӑ.

Вӑл Хӗрлӗ Ҫара, совет халӑхне, правительствӑна тата партийе вӗҫӗ-хӗррисӗр йуратни ҫинчен, Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн боецӗсен командирӗсем тата политработникӗсем аслӑ Совет Союзӗн чиккинче тӑшманӑн мӗн пур тапӑнӑвне сирсе пӑрахма хатӗрри ҫинчен калать.

Калинин йулташ унтан слесӑр Бондаков йулташа, цех мастӑрне Зайцев йулташа, дӳраљщик Матвейӗв йулташа тата ытти работниксене, оборонӑ промышленнӑҫӗн ӗҫӗнче чаплӑ ҫитӗнӳ тунӑшӑн наградӑланӑскерсене, орденсем панӑ.

Ун хыҫҫӑн Калинин йулташ Кийӗври Государствӑ Консерваторийӗ вӑл 25 ҫул тултарнӑ йубилей йачӗпе тата Совет Украинин музӑк кадрӗсене хатӗрлесе кӑларас тӗлӗшпе чаплӑ ӗҫсем тунӑшӑн наградӑланӑ представителӗсене тата консерваторин чаплӑ педагогпрофесӑрӗсене Бертйе, Магазинер, Муравйова йулташсене, професӑр - композитӑрсене Ревуцки, Љатошински йулташсене тата ыттисене те орденсем панӑ.

Консерватори йачӗпе Ленин орденне илсе, консерватори директӑрӗ професӑр Луфер хӗрӳлӗ сӑмах тухса каланӑ.

Калинин йулташ, орденсем парса саламлӑ кӗске сӑмах каланӑ, вӑл хӑйӗн сӑмахӗнче наградӑ илнисене хӑйсен малашнехи ӗҫӗнче ҫитӗнӳсем тума суннӑ.

Калинин йулташ Кийӗври Государствӑ Консерваторин наградӑ илнӗ педагогӗсене уйрӑмӑн сывлӑх суннӑ.

(ТАСС).

Ӑмӑртакан икӗ район канашлӑвӗ

Вайлӑ тырпулшӑн социалисӑмла ӑмӑртакан районсем — Йелчӗкпе Патӑрйел,—ҫуракинче ӑмӑрту договӑрне мӗнле пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслесе тухнӑ хыҫҫӑн, икӗ районӗнчен те колхоз представителӗсем тата йалхуҫалӑх работникӗсем пӗрле пухӑнса, майӑн 28-мӗшӗнче канашлу туса иртерчӗҫ.

Колхозсен уй-хирне тухса тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, ҫураки ӗҫне икӗ районӗнче те лайӑх пахалӑхпа иртернине палӑртнӑ. Ҫуртри калчисем пур ҫӗрте те аван шӑтса ӳсеҫҫӗ. Икӗ районӗнче те ҫурхи тӗштырӑсене 100 процентчӗпех суртлӑ вӑрлӑхпа, суртласа тасатса тата вутпуҫҫирен чӳкесе акнӑ. Патӑрйел районӗнче тӗштырӑ вӑрлӑхӗсене 80 процента йахӑн йаровизациленӗ, Йелчӗк районӗнче 4443 гектар ҫине акмалӑх йаровизациленӗ. Патӑрйел районӗнче тата 1045 гектар пӑрҫалӑ тырӑсене нитрагинласа акнӑ. Икӗ районӗнче те ретлӗ сейалкӑсемпе нумай акнӑ.

Социалисӑмла ӑмӑрту кӑҫалхи ҫуракинче стахановецсен йышне, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме нумай пулӑшнӑ. Патӑрйел районӗнчи „Ҫалтӑр" колхозра П. Перепелкин 13 ретлӗ сейалкӑпа кунне 11-шер гектар акса пынӑ. Чылай колхозниксем икӗ касӑлӑ плугпа 2-шер гектар ытларах сухаланӑ. Ҫеверев йулташӑн трактӑр бригади ҫуракинче пурӗ 530 гектар сухаланӑ (трактӑр пуҫне 177 гектар сухаланӑ). Орденоносец Павлӑв йулташ бригади 491 гектар сухаланӑ.

Вайлӑ тырпул илесси ҫуракине мӗнле иртернинчен нумай килет. Анчах та, вайлӑ тырпулшӑн кӗрешес ӗҫ ҫуракине иртернипех пӗтмест. Хаљ ӗнтӗ, ҫуракине иртернӗ хыҫҫӑн, калчасене пӑхса ӳстерес, ҫумкурӑксене ҫумласа тӑрас ӗҫе лайӑх организацилесе тырпулсене пухса кӗртес ӗҫе хатӗрленме тытӑнмала.

Канашлӑва пухӑннӑ колхоз представителӗсем калчасене лайӑх пӑхса ӳстерес тӗлӗшпе ҫакӑн пек ӗҫсене туса иртерме пулчӗҫ:

кӗрхи тулӑ калчисене пӗтӗм лаптӑк ҫинче хутӑш пулнӑ урӑх тӗрлӗ тырӑ калчисене ийунӗн 5-мӗшне ҫитиччен ҫумласа тухма;

калчасене ҫумкурӑксенчен йалан тасатса тӑма, ҫӗрулми тата тымар ҫимӗҫсем лартнӑ уйра 3 хутран кайа мар ҫумкурӑксене ҫумласа тухма;

таса ҫӗртме тумали плана правительствӑ панӑ срукра тултарса ҫу касиччен ҫумкурӑксенчен таса тытса тӑма;

тырпулсене пуҫтарса кӗртес ӗҫе хатӗрленес шутпа суйлав кунӗ ҫитиччен—ийунӗн 26-мӗшне машинӑсене пурне те йусаса ҫитерме тата ийунӗн 5-мӗшне утӑ ҫулмали машинӑсемпе ҫавасене хатӗрлесе ҫитерме;

тырӑ хывмали ампарсене халех дезинфекцилесе хатӗрлесе лартма тата ийунӗн 26-мӗшне витне итемсемпе тырӑ типӗтмӗлисем туса ҫитерме.

Кунсӑр пуҫне тата канашлӑва пухӑннӑ колхозниксемпе йалхуҫалӑх специалисӗсем выљӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе малала йарас тӗлӗшпе те конкретлӑ обйазательствӑсем йышӑнчӗҫ.

Канашлу йулашкинчен Чӑваш республикинчи колхозсене пурне те калчасене лайӑх пӑхса ӳстерсе, тырпулсене пухса кӗртес ӗҫе лайӑх организацилесе иртерме чӗнсе калама йышӑнчӗ.

Фашисла Германире

Фашисла Германире ӗҫҫыннисен нимӗнле права та ҫук. Унта фашисла партисӗр пуҫне ыттисене пурне те саластса йанӑ. Халӑх хӑйӗн нушисем ҫинчен тулли сасӑпа нимӗн те калама пултараймасть. Халӑх правишӗн каланӑ кашни сӑмахах пӑлхав тесе шутлаҫҫӗ. Халӑх правишӗн тӑрса мӗн те пулин каланӑ ҫынна фашиссем часах тӗрмене йе концлагӗре персе чикеҫҫӗ, йе унӑн пуҫне касса татаҫҫӗ.

Анчах Германири коммунистсен партийӗ, нимӗнле йӑвӑрлӑха пӑхса тӑмасӑр, нимӗнле хӑрушлӑхран хӑрамасӑр, тискер фашисӑма хирӗҫ кӗрешме халӑх вӑйӗсене пухса пырать, халӑх массисене пӗрлӗхлӗ халӑх фрончӗ тӑвас ҫулпа илсе пырать. Фашисла террор условийӗсенче фашисӑма хирӗҫ халӑх фрончӗ туса пӗтӗҫтерме, паллах, ҫӑмӑл мар, уҫҫӑн ӗҫлеме май килнӗ ҫӗрти условисемпе танлаштарсан, пин хут йӑвӑртарах. Ҫапах та ку тӗлӗшпе Германире чылай ҫӗрте малтанхи утӑмсем тунӑ.

Фашистсем ик-виҫӗ ҫул кайарах пӗтӗм тӗнче илтмеле ҫапла пӗлтерчӗҫ: Германире текех коммунистсем ҫук, вӗсене тӗп тунӑ, тымарӗ-мӗнӗпех тӑпӑлтарса тӑкнӑ, терӗҫ.

Чӑннипе илсен, йунлӑ фашисӑм пуҫпулса пурнакан Германире те коммунистсен партийӗ пур. Вӑрттӑн ӗҫлеме тивет пулин те, ҫав парти тӗлӗнмелле паттӑрӑн ӗҫлет. Германири коммунистсен партийӗ фашисӑма хирӗҫле йухӑма йӗртсе пырать. Фашистсен вӑрҫӑ пуҫласа йарас ирсӗр политикине тӑрӑ шыв ҫине кӑларас тӗлӗшпе хытӑ ӗҫлет. Коммунистсен партийӗн авторитечӗ ӳснӗ ҫемӗн ӳсет.

Коммунистсен партийӗн вӑрттӑн тухса тӑракан тӗп органӗ—„Роте Фане" йатлӑ хаҫачӗ пур. Унӑн вӑрттӑн ӗҫлекен радиостанци пур. Сӑмах майӗпе ҫакна каласа хӑвармала: фашистсем коммунистсен радиостанцине мӗн тӗрлӗ шыраман пулӗ, мӗн тӗрлӗ ухтарман пулӗ, анчах тӗлӗнмелле станци тупаймасть. Ҫав вӑхӑтрах вӑл кашни кун, пӗр палӑртса хунӑ вӑхӑтра тӗрлӗрен ҫӗнӗ хыпарсем пӗлтерет, Испани халӑхӗн паттӑр кӗрешӗвӗ ҫинчен каласа парать, фашисӑма тӑрӑ шыв ҫине кӑларать, халӑх массисене фашисӑма хирӗҫ кӗрешме чӗнет т. ыт. те.

„Роте Фане" хаҫат пит ҫӳхе (пирус) хучӗ ҫине пичетленсе тухать. Унӑн пысӑкӑшӗ (полоса урлӑшӗ)—15 сантиметр, тӑрӑшшӗ—23 сантиметр. Вӑл кашни номӗртех вулакансене сыхӑ пулма вӗрентет: „Вулакан! хаҫата камран илнине никама та ан пӗлтер".

Хаҫат хӑйӗн заметкисенче—хроникӑра рабочисем фашисла режима хирӗҫ мӗнле кӗрешни ҫинчен каласа парать. Акӑ ҫавӑн пек нумай заметкӑсенчен пӗри: „Х... савӑтра фашисӑма хирӗҫле ҫынсем гитлӗрецсен вӑрҫӑ агитацине хирӗҫ ҫӗнӗ майпа ӑнаҫлӑн кӗрешеҫҫӗ. Тӗнчери империалисӑм вӑрҫинче пулнӑ ҫынсем ӗҫ вӑхӑтӗнче ҫамрӑк йулташӗсене фронтра тӳссе курни ҫинчен каласа кӑтартаҫҫӗ. Фронтра ҫынсене калама ҫук тискеррӗн вӗлерни ҫинчен, тылра выҫӑ пурнӑҫпа аптӑраса пурӑнни ҫинчен каласа параҫҫӗ. Кӑнтӑрлахи апат вӑхӑтӗнче Испани ҫинчен калаҫаҫҫӗ".

Октӑбӗрти Социалисӑмла Аслӑ Револђуци 20 ҫул тултарнӑ йатпа йатарласа кӑларнӑ номӗрте 1924 ҫулти йанварӗн 24-мӗшӗнче Сталин йулташ тупатуса каланине пичетлесе кӑларнӑ. Умстатйине „Сталин—пирӗн саманари аслӑран та аслӑ халӑх ҫулпуҫӗ"—тесе йат панӑ. Ҫав номӗртех Германири рабочисемпе хресченсем Совет Союзӗ ҫинчен каласа панисене чылай пичетлесе кӑларнӑ. Турингири пир-авӑр савӑтӗнче ӗҫлекен рабочи ҫапла ҫырать: „ССР Союзӗ миршӑн тӑнине епӗр лайӑх пӗлетпӗр. Гитлӗр—вӑрҫӑ вутне чӗртекенни. Ӑна та пурте лайӑх пӗлеҫҫӗ", тет. Тӗпӗр заметкӑра ҫапла каланӑ:

„Атӑл тӑрӑхӗнчи нимӗҫсен социалисӑмлӑ республикинче ӗлӗк помещиксем тытнӑ ҫӗре халӗ колхозсене ӗмӗрлӗхе усӑ курма ҫирӗплетсе панӑ. Совет правительстви колхозсене трактӑрсем, комбайнсем, грузовиксем тата ытти машинӑсем панӑ.

Патша саманинче пӗтӗм облӑҫӗпе те 178 учитӗл ҫеҫ пулнӑ, халӗ унта 3 пин ытла учитӗл. Ҫичӗ ҫул вӗренмели 152 шкул тата вунӑ ҫул вӗренмели 30 шкул ҫӗнӗрен туса лартнӑ".

Ҫав номӗртех Хӗрлӗ Ҫар 20 ҫул тултарни ҫинчен пӗтӗм чунтан вӑртан ҫырнӑ статйа пур: „Германири рабочисем,—тенӗ ҫав статйара,—хӑйсем Хӗрлӗ Ҫарпа таччӑн ҫыхӑнса тӑнине питӗ лайӑх туйаҫҫӗ. Вӗсем Гитлӗра ҫӗнӗ вӑрҫӑ пуҫлама чараймасан, Германи фашисӗсем Совет Союзӗ ҫине тапӑнас-мӗн пулсан, Германири рабочисем хӑйсен халӑхӗшӗн Гитлӗра хирӗҫ кӗрешӗҫ, мирпе ирӗклӗх вӑйӗсемпе пӗрле тӑрса кӗрешӗҫ. Вӗсем Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗпе пӗрле пулӗҫ, Гитлӗра ҫӗнтерме тата Германие ирӗке кӑларма пулӑшӗҫ".

Коммунистсен партине, нимӗнле тискер террор та халран йама пултараймасть. Вӑл пин тӗрлӗ ҫулпа массӑсемпе ҫыхӑнса тӑрать. Ҫав ҫыхӑну саралнӑ ҫемӗн саралса, тӗрекленнӗ ҫемӗн тӗрекленсе пырать.

Социал-демократла партийӗн реакцилӗ пуҫлӑхӗсем фашисӑма влаҫ патне пыма ҫул уҫса пачӗҫ. Вӗсем халӗ халӑх фронтне пӗтӗҫтерсе ҫирӗплетес ӗҫе хирӗҫ тӑраҫҫӗ. Троцкисла провокатӑрсемпе, троцкисла бандитсемпе пӗр каварлӑ пулса, халӑх фронтне хирӗҫ кӗрешеҫҫӗ. Социал-демократла пуҫлӑхсем массӑсен кӗрешӗвӗнчен темрен хӑранӑ пекех хӑраҫҫӗ. Коммунистсене хӗсӗрлес тесен, Совет Союзӗ ҫинчен ӗлек сарас тесен, ҫав социал-демократла сутӑнчӑксен хастарлӑх чылай вара.

Анчах кирек мӗнле пулсан та, халӑх фрончӗ ҫитӗнсе пырать. Вӑл айалтан, рабочисем хушшинчен ӳссе хӑпарать. Германири ӗҫҫыннисем фашисла, йунлӑ режима хирӗҫ кӗрешесси вайлансах пырать. Вӑл халӗ пуринчен ытла пассивлӑн хирӗҫ тӑрас йенне, „пӑшӑлтатса" пропагандӑлас йенпе пулса пырать, анчах вӑл ҫавӑнпа пӗрлех хастарлӑ кӗрешес формӑна та куҫса пырать.

Германи халӑхӗн халӗ пӑшӑлтатма тивет, мӗншӗн тесен вӑл хӑйӗн шухӑшӗсене уҫҫӑн каласа пама пултараймасть, ӑна тискер фашисӑм ирӗклӗн ҫӑвар уҫса калаҫма памасть. „Пӑшӑлтатса" пропагандӑлас меслет ирӗклӗн ҫӑвар уҫса калаҫассишӗн кӗрешес ӗҫре малтанхи утӑм пулса тӑрать.

Пӗтӗм Германипе пӑшӑлти сас илтӗнет. Рабочи пӗрле ӗҫлекен йулташӗпе пӑшӑлтатать, хресчен хӑйӗн кӳршипе пӑшӑлтатать, учитӗл шкул ачисен ашшӗ-амӑшӗпе пӑшӑлтатать. Икӗ ҫул ӗнтӗ пӗрпӗрне шӑппӑн: „тупӑ вырӑнне пире ҫителӗклӗ сӗт-ҫу кирлӗ", теҫҫӗ. Ҫулталӑк ҫурӑ ӗнтӗ: „Германи љотчикӗсене Испанире мӗн кирлӗ", тесе пӑшӑлтатаҫҫӗ. Совета хирӗҫле „сылтӑм-троцкисла блока" сут тунӑ вӑхӑтра фашисла пичетчи киревсӗр, чи ирсӗр ӗлек сарнӑ пулсан, нимӗҫ рабочисем ҫапла каланӑ: „фашиссем чӑтма ҫук троцкистсен хутне кӗреҫҫӗ пулсан, вӗсем, троцкистсем, Гитлӗр фашисӑмӗпе пӗрле етемлӗхе хирӗҫ кӗрешнӗ. Совет сучӗ тӗрӗс тӑвать, вӑл хӑйӗн мухтавлӑ ӗҫӗпе совет халӑхне ҫеҫ мар, п[illegible]тӗнчери ӗҫхалӑхне калама ҫук пысӑк усӑ кӳрет", тенӗ.

Ессенри пӗр савӑт хӳмисем ҫине пысӑк саспалисемпе ҫакӑн пек лозунг ҫырса хунӑ: „Алӑрсене илӗр, палачсем! Испани халӑхӗ хӑйӗн пурнӑҫне хӑй пӗлнӗ пек тӑвӗ"

Германи халӑхӗ шӑппӑн пӑшӑлтатни фашисӑма канӑҫ памасть. Пӗр паллӑ фашис, Ервин Рогаљский, фашисӑма хирӗҫле агитаци ҫинчен ҫапла ҫырать: „Халӑха пӑлхатас майпа мӗн май килнӗ, ҫавӑнпа усӑ кураҫҫӗ. Пичетлесе кӑларас вырӑнне „пӑшӑлти хаҫат" кӑлараҫҫӗ. Ҫивӗч агитатӑр ҫавӑн пек хаҫатӑн „редактӑрӗ", ҫенсацинӗ йуратакан халӑх хаҫата сараканни пулса тӑрать. Умстатйисене Страсбургри радиостанци вуласа парать. Сӑмах хаҫатӑн редактӑрне ӗҫлеме ыттисенчен ҫӑмӑлтарах... Мӗншӗн тесен унӑн ӑста хатӗрленӗ материалӗсене сарма пулӑшакансем темӗн чухлех тупӑнаҫҫӗ... Тӑватӑҫуллӑх плана хирӗҫ агитацилес ӗҫре ҫав нашкал меслетпе усӑ курни уйрӑмах хытӑ сисӗнет".

Германи фашисӑмӗ Итали фашисӑмӗпе пӗрле Испани халӑхне хирӗҫ вӑрҫать пулсан, Германи рабочисем Испани ачисене тата Испани хӗрарӑмӗсене пулӑшма вӑрттӑн укҫа пуҫаҫҫӗ, Испани ачисем валљи тумтир ҫӗлесе хатӗрлеҫҫӗ. Унтан та ытларах, вӗсем Испани республикин ҫарӗнче те сахал мар. Вилӗмрен хӑрамасӑр, чикӗ урла вӑрттӑн каҫса, йут ҫӗршыв урлӑ каҫса, республикӑлӑ Испанин паттӑр салтакӗсемпе йунашар тӑрса, фашисӑма хирӗҫ ҫапаҫаҫҫӗ.

Германири рабочи клас ӗҫ кунне вӑрӑмлатассине хирӗҫ кӗрешнӗ ҫемӗн хытӑрах кӗрешет. Ҫавӑн пекех вӑл рабочисен ӗҫукҫине ӳстерессишӗн те кӗрешет. Саар облӑҫӗнче ҫакӑн пек ӗҫ пулса иртнӗ. Шахтӑ хуҫисем рабочисене сверхурочнӑй, унсӑр пуҫне тата вырсарни кунсенче ӗҫлеттерессшӗн пулнӑ, ҫав вӑхӑтрах ӗҫукҫине малтанхи пекех хӑварма шутланӑ. Горњаксем рабочисен пухӑвӗсене пухма, ыйтӑва ҫав пухусенче сӳтсе-йавма ыйтнӑ. 43 пин рабочирен виҫӗ пайӗ ҫӗҫ хуҫасем лартнӑ ыйту майлӑ сасӑлана, ыттисем пурте хирӗҫ сасӑланӑ. Ку ӗнтӗ фашисӑма хирӗҫ политикӑлӑ демонстраци туни пулса тӑрать.

Германи фашисӗсем хӑйсен тылӗ ҫине шанма пултараймаҫҫӗ. Фашисӑма хирӗҫле „Дейче фољксцейтунг" хаҫат ҫапла пӗлтерет: апрел пӗтес чух тата май пуҫланнӑ тӗле Германире пур ҫӗрте те вӑрттӑн канашлӑвсем пулса иртнӗ, ҫав канашлӑвсенче фашисла партин облӑҫ организацийӗсен пуҫлӑхӗсем тата Гестапо (Германири вӑрттӑн полици) представителӗсем пулнӑ. Канашлӑвсенче Германи пулас вӑрҫа хатӗрленни ҫинчен сӳтсе-йавнӑ. Пуринчен ытла тыла хатӗрлесси ҫинчен хытӑ калаҫнӑ.

Хаљ асӑннӑ хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, пӗр канашлӑвра доклатчик ҫапла каланӑ: „Йулашки вӑхӑтри ӗҫсем, уйрӑмах апрелӗн 10-мӗшӗнче иртернӗ плебисцит ҫакӑн ҫине кӑтартса пачӗҫ: Германире правительствӑна кураймасӑн ҫынсем нумай... Мобилизаци пуҫлансан малтанхи кунсенех йӗрке пӑсӑлса кайма пултарать". Тепӗр канашлӑвра доклатчик фашисла чиновниксене ҫапла канаш панӑ: „Сирӗн хӑвӑрпа кӳршӗре пурнакан ҫынсене тата хӑвӑр паллакан ҫынсен вӗҫӗлле йытӑ пекех сӑнаса тӑмала, сирӗн вӗсем мӗн тунине пурне те пӗлмелле".

Фашистсен тылран хӑрама сӑлтавӗ пур. Рабочисем акӑ мӗн калаҫҫӗ: „малтан пире винтовка паччӑр, винтовка илсен мӗн тумаллине хамӑрах пӗлетпӗр" йе „вӑрҫа пуҫланса кайсан, алла панӑ винтовкӑна вӑрҫа пуҫлакансене хирӗҫ тытапӑр", теҫҫӗ.

Германири коммунистсен партийӗ халӑх фронтне пӗтӗҫтерес тӗлӗшпе паттӑрӑн кӗрешет. Гитлӗр фашисӑмӗ те, троцкисла шпионсем те, социал-демократилӗ партийӗн пуҫлӑхӗсем те, фашисӑма хирӗҫ вирлӗ фронт тӑвас ӗҫе тытса чараймӗҫ.

П. Иванов.

Австрири гитлĕрла террор

Икĕ уйăх хушши ытларах ĕнтĕ Германи фашисĕмĕ Итали фашисăмĕпе килĕшсе, Англи консерваторĕсен тата Францин реакцилĕ буржуазийĕн хÿттипе Австри халăхне пусмăрлаţ, Австри халăхĕн йунне тăкаţ. Германи фашисăмĕ Австрири рабочисемпе хресченĕсене, çавнашкалах Австри интеллигенцин представителĕсене вĕлерет, тĕрмесене хупа-хупа лартаţ.

Австрине хĕçпăшалпа тытса илме хатĕрленнĕ май, Германи фашисăмĕ çакна пурнăçлаччен чылай малтан Австрине тытса тăма тата унта массăлă террор организацилеме пысăк аппарат тунă. Çав пĕтĕм аппарата—фашисла пысăк чиновниксенчен пуçласа машинисткăсем тата ытти пĕчĕк ĕçре ĕçлекен работниксене çитиччĕнех Австрине Германи çарĕсем тытса иличчĕ вăхăтрах, вĕсене унта йанă.

Вена хулинче гестапон Австрири уйрăмне тунă, вăл хулан варринче „Метропольте" вырнаçнă пулнă.

Икĕ уйăх хушшинче Австрире тĕрмесен хисеçĕ чылайах ÿснĕ. Шкул çурчĕсенчен тĕрмесем, сăмахран Вена хулин 20-мĕш районĕнче тунă. Германи фашисĕсем Австринче концентраци лагерĕсем туса пĕтерне. Çакăн пек лагерсенчен пĕрине Зальцбурга, сывахĕнче паллă композитăр Моцарт çуралнă тата çулсеренех музыка фестивалĕсем пулса иртекен вырăнта тунă. Польшăн „Работник" йатлă хаçачĕ ку тĕлĕшпе çапла çырнă: „Ку вăхăтра Зальцбурга музыка вырăнне тĕрмене хупнисен ахлатни сассисем илтĕнеç. Кунпа пĕрлех, тĕрмене хупнисене Австри çĕршывĕнче хăварас тесе, Гиммлер распорйаженийĕ тăрăх, вĕсене Германири концлагерсене ăсатаççĕ. Фашисăма хирĕçле „Дейче информационен" йатлă бюллетен кăтартса панă тăрăх, Германин Дахоури концлагерне Австрире Гитлера хирĕç тăракансене 500 çын ытларах, вăл шутран 100 коммуниса ăсатнă. Çав концлагерех çĕнĕрен хупнисене те ăсатаççĕ.

Австрири Гитлерла террор çав тери анлăн саралса пыраţ, тĕрмене хупнисен хисепне шутласа кăларма та çук. Франци компартин „Йуманите" хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Австрири 6 пин рабочине Гитлер йĕрки çине тăшманла пăхнă тесе, Германине илсе кайса, концлагере хупнă. Англин „Нйус кроникл" хаçачĕ Вена хулинче тĕрмене хупнисен шучĕ 12 пин çынна çитет, Австрин ытти хулисенче тĕрмене хупнисен шучĕ 40 пин çынна çитет,—тесе пĕлтерет.

Тĕрмене хупнă çынсен пурнăçĕ çав тери йăвăр. Пĕччен хупмали камерăсенче час-часах икшер çын лартаççĕ, тĕрмене хупнисенчен нумайĕшĕсем, вĕсене матрацсемпе утийалсем памасан пирки урайĕнче сывăраççĕ. Тĕрмене хупнисене, уйрăмах хĕрарăмсене, фашиссен тĕрмисенче ĕçлекенĕсем кирек мĕн те тума пултараççĕ.

„Хăйсене хăйсем вĕлереççĕ" текенни те Австрире пит вăйлăн сарăлса пыраţ. Чăннипе кунта фашиссене хирĕç тăракансене тата Австрине никама пăхăнмала мар тăвас текенсене массăлă вĕлерни çинчен сăмах пыраţ.

Фашисла терроран çак форми анлăн саралса пыни çакăнтан та лайăх курăнаţ. „Прагер миттаг" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, пĕр уйăх хушшинче Вена хулинче 2 пин çын ытларах „хăйсене хăйсем вĕлерне" тĕслĕхсем пулнă.

Австри халăхне пĕр чарусăр пусмăрлассине тата хĕстерессине ытарас тесе, Германи фашисĕсем тĕрлĕрен майсемпе йеврейсене хирĕçтереççĕ. Вĕсем йеврейсене хирĕç террора тĕрлĕрен мăшкăллă майсемпе туса ирттереççĕ. Австрин Вена тата ытти хулисенче пурăнакан йеврейсене 200 пин çынна тĕрлĕрен майсемпе ирсĕрĕн мăшкăлаççĕ. Йеврей рабочисене тата служащисене пĕр шикленмесĕр урамсене кăларса йараççĕ; йеврей-врачсем, инженерсем, адвокатсем хăйсен профессипе ĕçлес правине çухатаççĕ.

Австрири Гитлерла террор Австри халăхне йутçĕршыв захватчикĕсене хирĕç тăратассине вăйлатаţ. Австри халăхĕсем хушшинче Австрине Германи колонийĕ тăвас политикăна хирĕç, Германи фашисĕсем çĕнĕрен çар авантюрĕсем тăвассине хирĕç тăрасси ÿссе пыраţ. Йутçĕршыв захватчикĕсене хирĕç кĕрешÿре вăрттăн ĕçлекен Австри компартийĕ йертсе пынипе фашисăма хирĕçле халăх пĕрлех фронтне пĕтĕçтерсе пыраţ.

Гитлерăвцăсем Австри халăхне пусмăрлани, вĕсене хĕсĕрлени Чехословаки, Венгри, Румыни тата ытти пĕчĕк çĕршывсен халăхĕсемшĕн урок пулса тăраţ, çаксене Германи фашисăмĕ малала черетпе тытса илме палăртнă.

Йамайкă утравĕ çинчи рабочисен хумханăвĕ

Йамайкă утравĕ çинче рабочисен хумханăвĕ халĕ те çаплипех пыраţ. Спениш Таун йатлă хулара ĕççĕр тăрса йулнисем сахăр плантацинче ĕçлекен çичĕ рабочине персе вĕлернине хирĕçлесе калама çук хăватлă демонстраци тунă. Полиципе демонстрантсем хушшинче çапăçу пулса иртнĕ. Ĕççĕр тăрса йулнисене тăвата çынна тата тăвата полицейскине амантнă. Пинцер негрсем темиçе сехет хушши полици çине атакăланă, вĕсем штурм туса тĕрмене туртса илсе, унтан хупса лартнă забастовщиксене ирĕке кăларма хăтланнă.

Утрав çинче пĕтĕм пурнăç чарăнса ларнă. Ĕç укçине ÿстерме ыйтнипе пĕрлех, бастовкă тавакансем арĕсленĕ рабочисене пурне те ирĕке кăларассишĕн хыттăн тăраççĕ.

(ТАСС).

Йапони авиацийĕ тапăнни

Майăн 28, 29 тата 30-мĕшĕнче Йапони самолючĕсем Кантон çине (Кăнтăр Китай) бомбăсем пăрахнă.

Майăн 29-мĕшĕнче бомбăсем пăрахнă çĕре 45 самолюот хутшăннă, майăн 30-мĕшĕнче—20 самолют, вĕсем хула çине 40 бомбă пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнипе майăн 28-шпе 29-мĕшĕнче хулара 440 çурт ытла ишĕлсе аннă тата лăпкă пурнăçпа пурăнакан халăхсем хушшинче 900 çын вилнĕ. Йапонецсем аманнисене пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен хĕрлĕ хĕрес отрйачĕсем çине те пулеметсенчен пенĕ.

(ТАСС).

Илийнкăри туллимар вăтам шкулти 7-мĕш класри пионерсем шкултан отлично вĕренсе тухма обйазательства панă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: 7-мĕш класри пионерсен пĕр звени.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Пĕлÿ тĕрĕслĕвĕнче

КАНАШ, педучилищă. Майăн 27-мĕшĕ. Пайан иккĕмĕш класра вĕренекен студентсем алгебрăпа пĕлÿ тĕрĕслевĕнче пулмала. Студентсем пурте шукăль тумланнă, хаваслă. Вăхăт 9 сехет. Звонок студентсене зала кĕме йыхăраţ. Икшерĕн лармали партăсем студентсемпе тулчĕç. Класа алгебрăпа вĕрентекен Тельцов тата ассистент Захарăв йулташсем кĕчĕç.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕ пуçланчĕ. Преподаватель Тельцов спискă тăрăх Нюра Александрăвăна чĕнчĕ. Вăл нимĕн хумханмасăр тухса умне тухрĕ те сĕтел çинчен ыйтусем çырнă билета илсе, васкамасăр, пĕр такăнмасăр ответлет. Ыйтусене ответлесе пĕтерчĕ те, задачăсем шутларĕ. Ассистент Захарăв ыйтусем пачĕ. Нюра Александрăвă вăл пана ыйтусене те аван ответлерĕ.

Нюра Александрăвă педучилищăра примерлĕ вĕренекен, активла комсомолкă. Вĕренÿре йалан отлично, хорошо паллăсем çеç илнĕ. Политзанятисене те вĕренме йĕркелĕ çÿренĕ.

Малала Нюра Алексеева билет илет.

— Килĕщетĕн-и ыйтусемпе? — ыйтрĕç унран.

— Килĕшмесĕр, килĕшетĕп. Вĕренÿ çулĕ тăршшийĕпех отлично вĕренсе пынă, пĕлÿ тĕрĕслевĕнче мĕншĕн ответлес мар-ха.

Алексеева нумай шухăшласа тăмасăрах билетри ыйтусене тĕрĕс ответлесе тухрĕ, геометрилĕ прогресси çинчен каласа пачĕ, задачăсем шутларĕ. — Çитет. Тĕрĕс ответлетĕн, терĕ ăна преподаватель.

Вĕсем иккĕш те отлично паллăсем илчĕç.

Пĕлÿ тĕрĕслевне лайăх ирттерес тĕлĕшпе хатĕрленме ку клас тахçанах тытăннă. Хăшпĕр предметсемпе консультацисем туса ирттернĕ. Унта ăнланман ыйтусене студентсем ыйтса пĕлнĕ, малтан мĕн вĕреннине çирĕплетнĕ.

Вĕренÿ çулĕ тăршшĕпех йĕркелĕ, материалсене тĕплĕн вĕренсе пырсан, паллах, пĕлÿ тĕрĕслевĕ аван иртет. Малтан вĕренÿре аван ĕлкĕрсе пынисем пĕлÿ тĕрĕслевĕнче те лайăх отметкăсем илеççĕ.

Халĕ II-мĕш класра вĕренекенсем физика, алгебра предмечĕсен пĕлÿ тĕрĕслевĕсенче пулнă. Ку предметсемпе чылай студентсем отлично, хорошо паллăсем илчĕç.

П. Ленский.

Фашиссем лăпкă пурнăçпа пурăнакан хуласем çине бомбăсем пăрахаççĕ

Майăн 29-мĕшĕнче çĕрле фашиссен авиацийĕ Валенси çине тăвата хутчен пырса бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе миçе çын вилнипе аманни халĕ паллă мар-ха.

Çав кунхинех фашиссен авиацийĕ Барселона çине икĕ хутчен бомбăсем пăрахма хăтланнă, анчах республиканецсем зенитлă артиллеринчен персе, вĕсене хăваласа йанă.

Аликантере (Валенсирен кăнтăрала) нумайах пулмаст фашиссен авиацийĕ бомбăсем пăрахнипе 378 çын вилнĕ. Çуртсен ишĕлчĕкĕсем хушшинчен çын виллисене çаплах тупаççĕ. Кунсăр пуçне, бомбăсемпе пенипе аманнисем—53 çын вилнĕ, 100 çын ытла вилес пек выртаççĕ.

(ТАСС).

Йапонири арĕссем

Йапонири полици органĕсем фашисăма тата вăрçа хирĕçле ĕç туса пынă тесе шутласа чылай çынсене арĕсленĕ. Йапони пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, арĕсленисем хушшинче сулахай профсойузсемпе тата фашисăма хирĕç кĕрешекен ытти организацисемпе сыхăнса тăракансем 1,220 çын шутланаççĕ. 235 çын пирки сут ĕçне пуçласа та йанă.

(ТАСС).

ПĔЛТЕРÿ

Правительства Государствăн 1938 çулхи шалти выигрышлă займне кăларма решени йышăннă. Займа перекет кассисем урлă халăх хушшинче укçала çеç сутаççĕ. Облигацисене нумай сруксенче тÿлемеле йе çыраннă тăрăх сармаççĕ.

Государствăн 1938 çулхи Шалти выигрышлă займ облигацийĕсене перекет кассисем кирек хăш вăхăтра та ирĕклĕн сутаççĕ тата кайала сутăн илеççĕ. Малтанлăха ку займ облигацийĕсене 1938 çулхи ийунĕн 1-мĕшĕнчен хăйĕн хакĕпе сутаççĕ, йунĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ кăтартса пана хаксемпе сутаççĕ тата облигацишĕн укçа тÿленĕ чух вăхăтлăх квитанци параççĕ.

Çак йĕркесемпе Шупашкар хулинчи перекет кассисем ку займ облигацийĕсене малтанлăха сутма пуçланă та ĕнтĕ. Адрĕссем: Центральная Сберкасса №60 (Красная площадь) и отделение 1 разр. №60 01 (при почте).

Районсенче—пур перекет кассисенче те сутаççĕ.

60-мĕш № Тĕп Перекет Касси.

3—3

Чăваш республикĕнчи армансен трестне

Асла економист-плановик

кирлĕ

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх

Адрĕс: Шупашкар, Урицкайа урамĕ 13. „Мельтрест", управльайушчи патне

3—2

Хватерсем кирлĕ

хак килĕшÿ тăрăх

Çак адрĕспе пĕлтермеле: улица Карла Маркса, 32а, Союзкинохроника. Телефон № 3—12.

3—2

Йалхуçалăх банкĕн Чăваш республикĕнчи кантурне

ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ

Машинисткă-секретар

кирлĕ

Условисемпе паллашма Йалхуçалăх банкне пымала.

2—1

ЧĂВАШСТРОЙТРЕСТРА

малтан ĕçлесе пурăннă рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служащисен ГОСУДАРСТВА ЗАЙОМĔСЕН ОБЛИГАЦИЙĔСЕНЕ илме пыма чĕнеççĕ. Облигацисене илсе илмели срук кăçалхи ийунĕн 1-мĕшĕччен. Ку срук иртсен облигацисене перекет кассине параççĕ.

3—2

Шупашкарти „Кожубряжь" артелне

Бухгалтĕр (материаллă пайа) 1
Бухгалтĕр (расчот пайне) 1
Бухгалтĕр (атă-пушмак производстви пайне) 1
Бухгалтĕр помощникĕ 1.
Хуралçăсем тата уборщицăсем

КИРЛĔ

Занятий вăхăтĕнче ыйтса пĕлмеле, улица Ленина, дом № 6.

Правлени.

3—2

Пайан театрсенче клубсенче сатсенче:

Пайан кино театрта	саслă, çĕнĕ, кино-драмă „КОМСОМОЛЬСК"

Чăваш АССР

Çутĕç Халăх Комиссариачĕ

Улатăрти, Патăрйелĕнчи, Канашри, Нурăсри, Пăрачкаври, Çĕрпÿри, Шупашкарти тата Йетĕрнери педагогикă училищисен 1-мĕш каласĕсене 1938—39 вĕренÿ çулĕнче вĕренекенсене илесси çинчен пĕлтерет.

Педагогикă училищисен 1-мĕш класне туллимар вăтам шкул пĕтернисене тата вăтам шкулта 7 çул вĕреннисене 15 çулхисенчен 35 çулхисем таран илеççĕ.

Зайавленисене училищăсен директăрĕсен йачĕпе йамала, пĕрле çак документсем кирлĕ:

а) Хăш çулта çурални çинчен свидетельства;
б) Вĕренни çинчен свидетельства;
в) Икĕ фотокартăчкă (кашнин çине алпусса çирĕплеттермеле).
г) Сывлăх пирки тухтăртан илнĕ справкă.

Документсене подлинниксене çеç памала. Зайавленисене ийунĕн 10-мĕшĕччен пуçласа августăн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

1-мĕш класа вĕренме кĕрекенсем пурте, отличниксемсĕр пуçне, августăн 16-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕччен испытани тытаççĕ—туллимар вăтам шкул программи тăрăх вырăс чĕлхипе, чăваш чĕлхипе, арифметикăпа (çыртарса тата сăмахпа) алгебрăпа (çыртарса), географипе, геометрипе тата ССР Союзĕн Конституцийĕпе (сăмахпа).

Шкул уйрăмĕсемсĕр пуçне педучилищăсенче тата çакнашкал уйрăмсем пур: Улатăрта—библиотекă уйрăмĕ, Канашра—шкул çулне çитменисен уйрăмĕ Йетĕрнере—физкультурă, Патăрйелĕнче—тутарсен (шкул) уйрăмĕ.

2—2

Шупашкарти Акушер шкулĕ

1938—39 вĕренÿ çулĕнче

Пĕрремĕш курса вĕренекенсене илесси çинчен пĕлтерет

Вĕренмели срук икĕ çул.

15 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран хĕрарăмсене тата арçынсене те, вăтам шкулта çичĕ çултан кайа мар вĕренни чухлĕ пĕлÿ илнисене йышăнаççĕ.

Зайавленисене ийунĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Зайавленисене шкул директăрĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле (подлинниксем кирлĕ) памала:

1. Хăш çулта çуралнине кăтартакан свидетельства.
2. Вĕренни çинчен свидетельства.
3. Государствăн емеллекен учрежденийĕнчен илнĕ ĕнентерÿ, ун çинче вĕренме кĕрекенĕн сывлăхĕ медицинă шкулне вĕренме кĕме йурăхлине кăтартни пулма кирлĕ.
4. Икĕ фото-картăчкă (хăй алпусса çирĕплеттерни)

Кусемсĕр пуçне 16 çултан иртнисем паспăрт пĕрле илсе килеççĕ.

Испытанине тăма ирĕк панисене хут йарса чĕнеççĕ. Чĕннĕ тăрăх çеç килмеле. Чĕнмесĕр килнисене испытанине кĕртмеççĕ.

Испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен пыраççĕ.

Шкула кĕрекенсене пурне те математикă тăрăх (арифметикă, алгебрă, геометри), физикă, географи, вырăс чĕлхи тата политграмота тăрăх (туллимар вăтам шкул программи чухлĕ) испытани тăваççĕ.

Çичĕ çуллă шкултан тĕп предметсемпе „отлично" тата ыттисемпе (рисовани, черчени, йурласси, музыкă тата физкультурă) „лайăх" паллăран кайа мар паллăçемпе вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ, çавнашкалах тата тулли вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисене испытани тумаççĕ.

Испытани тытнисене августан 21-мĕшĕнчен 25-мĕшĕччен вĕренекенсен шутне кĕртеççĕ.

Вĕренекенсене вальли общежити пур, вĕреннине кура стипенди параççĕ.

Занятисем сентйабрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Шкул адрĕсĕ: гор. Чебоксары, Волгострой, Акушерская школа.

ДИРЕКЦИ.

3—3

Строительства ĕçĕ йапăх пыраţ

Чăваш Обкомĕн промышленнăçпа транспорт пайĕ тата „Чăваш Коммунĕ" редакцийĕ çĕнĕ строительства ĕçĕ мĕнле пыни çинчен сÿтсе йавас майпа ирттернĕ канашлура халăх комиссариачĕсен тата строительства организацисен представителĕсем тухса каланисенчен республикăри çĕнĕ строительствăсен 1937 çулхи планне çурринĕ йахăн çеç тултарни палăрчĕ. Нумай çĕнĕрен тума пуçлана пурăнмали çуртсем, ача йаслисем, ача çуратмали çуртсем, шкулсем, пĕр çулта туса пĕтермелисем, икĕ-виçĕ çула тăсăлса пыраççĕ.

Кăçал строительства ĕçне организацисем питĕ йапăх пуçларĕç. Кăçал Шупашкарта питĕ те пахха тăвата хутлă шкул çурчĕ лартмала. Партипе правительства çак шкула кăçалхи вĕренÿ çулĕ пуçланиччен туса пĕтерме хушнă, 880 ача вĕренÿ çулне çак шкулта пуçламала. Анчах мĕнле пыраţ-ха çак шкула тăвас ĕç?

Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе Шупашкар хула совечĕ çак шкулла тăвас ĕçре çителĕксĕр ĕçлени курăнаţ. Вĕренÿ çулĕ пуçланасси тата виçĕ уйăх çеç йулна пулсан та, шкул çуртне тума тĕреклĕн тытăнни курăнмаст. Пайанхи куна та, строительства организацисемпе договăр туман. Хула совечĕ шкула хăш вырăнта тумалине виçĕ хутчен улăштарса пырса, ахаль те начар пыракан ĕççене пушшех начарлатса пынă.

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Булганин йулташ çак шкула тăвас ĕçе хăстарлăн тытăнма хушаţ.

Çавăн пекех Улатăрти 400 вырăнлă шкул тăвасси те начар пыраţ.

Шупашкарта кăçал 100 вырăнла ача сачĕ тумала. Анчах ку таранччен те çурт тума пуçламан, нимле техникăла документсем те çук.

— Кирек хăш çĕнĕ строительствăна илсе пăхсан та, ĕçсем ăнăçлă пыни курăнмаст. Çаксем ĕнтĕ пирĕн республикăри хăшпĕр халăх комиссариачĕсем, вĕсен руководителĕсем çĕнĕ строительства ĕçне питех те çителĕксĕр туса пыни çинчен калаççĕ.

Ака Сывлăх Халăх Комиссариатне илер. Ача çуратмали çуртсем, ачасен йаслисем тăвасси çултан çул пурнăçланса пыраймаст. Çĕмĕрлере иртнĕ çулах ача çуратмали çурт туса пĕтермеле пулнă. Кăçал та ăна туса пĕтересси курăнмаст. Çакăнтах ачасен йаслине тăвата çул тăваççĕ. Пирвайхи сметăран 80 пин ытлашши укçа пĕтерне, çапах та çуртне туса пĕтереймен.

Шупашкарта куç лечебници тăвас ĕçе тытăнман та.

Коммунала хуçайства комиссариачĕ тăрăх, 7 мĕлйун тенкĕрен ытларах тăракан çĕнĕ строительства тумала. Ку шутра пĕр мĕлйуна йахăн советсен çурчĕ, унтан Улатăрпа Канашра мунча, Шупашкарта 24 тата 26 хватерлĕ çуртсем, водопровод т. ыт. тумала.

24 хватерлĕ çурт тумали вырăнтан (Карл Маркс урамĕ) хальте çуртсене куçарма пуçламан, çурта тума проектсемпе сметăсем çук. Чăннипе каласан, кăçал пурăнмала тумали çурта тăвасси пĕтсе ларнă.

Советсен çуртне туса пĕтерме тата 308 тонна цемент кирлĕ. Халĕ мĕн пурĕ те 51 тонна çеç. Çавăн пекех тимĕр, олифа таврашсем те çитмеççĕ. Нарйадсем тăрăх, строительства вальли материалсем илесси чи йулашки вырăнта тăраţ. Çавăнпа та нумай çĕнĕ строительствăсем çултан çула тăсăлса пыраççĕ. Халăх тăшманĕсем çĕнĕ строительства ĕçне нумай сăтăрласа пыни курăнаţ, вĕсем халĕ те хăшпĕр строительства площадкисенче сăтăрла ĕçсем тăваççĕ.

Пĕр строительствăра та кирлĕ таран материалсем çукки тĕлĕнтерет. Пĕри пур, тепри çук—чул пур, цемент çук, цемент пур, тимĕр çук. Иртнĕ çул Коммунала Халăх Комиссариачĕ хăйĕн строительствисем вальли фондла нарйадсемпе цемент илессине 16 процент, олиф 10 процент çеç тултарнă. Кăçалхи çул та çакăн пекех пулса тăчĕ.

Шупашкарти резина савăтне тума кăçалхи çул пĕр мĕлйун çурă панă. Укçапа уса курмаççĕ, савăта тума пуçлама проектсем çук, строительства площадкинче нимĕн туни те курăнмаст. Чăннипе ку савăта тума та тытăнман-ха.

Çакăн пекех Улатăрти гармонь хапрăкне туса пĕтерсе ĕçе кÿртесси те нумайа тăсăлса пычĕ.

Хăшпĕр çĕнĕ çуртйĕрсене, коммунала хуçайства предприйатисене сăтăрла тунисем пур. Канашри елеватăрăн корпусĕ туса пĕтеричченех çурăлса аннă. Çĕнĕ строительства ĕçĕнчи сăтăрлăха тĕпĕ йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкмала.

Чăтма çук начар ĕçлени, ответлăха çухатни суту-илÿ организацисенче те пур. Карл Маркс урамĕнче Чăвашторг тăвата пилĕк çулта та пĕр магазин туса пĕтереймест. Чăвашсойуз Карл Маркс урамĕнчи виçĕ хутлă çуртне пилĕк çул ытла тăваţ. Вăл хулари тĕп урамра хăйĕн виçĕ хутлă çуртне склад—çурт туса хурасшăн тавлашаţ.

Çуртйĕр тăвассине çулĕ-çулĕпе тăсса пыни строительства ĕçне хаклатса пыраţ. Çавăнпа та нумай стройкăсем хăйсен пирвайхи сметипе тума пуçлана йапаласене туса пĕтереймеççĕ.

Пирĕн Чăваш республикĕнче çĕнĕ строительства ĕçĕ, ытти çĕртисемпе танлаштарсан, питех начар пыни уççăнах курăнса тăраţ. Çак тĕлĕшре Чăваш республикĕнчи Халăх Комиссарĕсен Совечĕ те кирлĕ таран ĕçлени курăнмаст. Практикăла, конкретлă ĕç çукки, пуша сăмах çапни малашне те нумайах ĕçе улшăнтарас çук.

Çĕнĕ строительства ĕçне большевикла пурнăçлама халех тытăнмала.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 270. Гор. Чебоксары, Типографи № 1 Чувашполиграфтрест. Заказ № 408.